www.tavanen.ru

Таван Ен

плюс Причебоксарье

«Раççей мисĕшĕн» сасăлăр!

Манăн пуçлăх «Серега»
РЕЙД → 2

Çара лекес юлашки шанăç
КУÇА-КУÇĂН → 3

Эрешлĕ почта ешчĕкĕ
ФОТОФАКТ → 4

№13 • (106245-106246) • АПРЕЛĔН 5-МĔШĔ • 2018 • КĔÇНЕРНИКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хакĕ ирĕклĕ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

• АХРĂМ

Чăвашсен пĕрремĕш фотографĕсен мăнукĕсем мăн аслашшĕн ĕç хатĕрне тĕпчеççĕ

Пĕр кадра та сиктермесĕр

Чăвашсен пĕрремĕш фотографĕн кĕçĕн мăнукĕсем «Таван Ен» редакцийĕнче хăнара пулчĕç

Тĕлĕнмелле ас тăвăма упраççĕ ĕлĕкхи япаласем. Алла илетĕн те – çав вăхăтпа сывлама тытăнатăн. Енчен те вĕсем пирĕн пурнăçа тăвансенчен, мăн асаттесемпе асаннесенчен кĕрсен вара антиквариат хакне виçме нимĕнле укçатенкĕ те çитеймĕ.

Паха тупра

Александрпа Андрея тантăшĕсем чăннипех те ăмсанма пултараççĕ. Чăвашсен пĕрремĕш фотографĕн, пирĕн ентешĕн, Ишекре çуралса ӳснĕ Николай Костинăн кĕçĕн мăнукĕсем амăшĕпе Ольгăпа иртнĕ канмалли кунсенче ирхи рейспа Мускавран ятарласа вĕçсе çитрĕç. Шупашкарта пĕр тăван Костин фотографсен ĕçĕсенчен йĕркеленĕ курав пирки вĕсене Алексей Борзов фотожурналист пĕлтернĕ. Патшалăх ӳнер музейĕнче вара вăл сумлă делегацишĕн гид вырăнне пулчĕ. Ĕçтешĕсен пурнăç çулĕсене тĕпченĕ, сăн ӳкерчĕкĕсене пухса пынă Алексей Владимирович, çавăнпа та вĕсем çинчен мăнукĕсене унран лайăхрах никам та каласа параймĕ-тĕр. Тахăш саманта, чăваш çĕрĕсенчен куçса кайсан, ăрусен çыхăнăвĕ пачах татăлнă пулнă. Паян вара, харпăр хăйĕн йăх-несĕлне тĕпчес туртăм халăхра вăй илсех пынă тапхăрта, Костинсем-кĕçĕннисем тăванĕсем пирки истории çупкăмăн-çупкăмăн пухаççĕ.

Акă Шупашкарти Хĕрлĕ лапам тăрăх хула валли апатçимĕç, тыр-пул тиенĕ «хĕрлĕ лав» пырать. Октябрьти революци хыççăнхи сăн ӳкерчĕкре чăвашла çырса хунине вулама пулать. Лавкка умĕнчи реклама хăми, «Атăл» хăна çурчĕн строительстви, вăл вăхăтра ШĔМ тытăмне кĕнĕ «Автодор», иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчи «интернет» тесе ят хунă радиотелефонсем, Совет Союзĕнчи пĕрремĕш «Шупашкар – Канаш» аэроçуна линине уçни, Кремлĕн Хĕрлĕ лапамри йывăç кӳлепи – Костинсен фотоаппарачĕ пĕр кадра та сиктермен тейĕн. Шупашкарăн шыв айне юлнă вырăнĕсене те паян вĕсен ĕçĕсенче кăна курма пулать. Тĕлĕнмелле, сăн ӳкерчĕксене тума вĕсем чи çӳллĕ çуртсен тăррине хăпарнă, ун чухне хальхи пек квадракоптер пирки вĕсем ĕмĕтленме те пултарайман. Авторсен ĕçĕсем пурте Чăваш АССРĕн 1927-1931 çулсенчи пурнăçне яр-уççăн кăтартакан 1776 сăн ӳкерчĕкрен тăракан истори альбомĕнче вырăн тупнă.

Усă курма мар, меллĕ пăрмасăр уçма та çук техника хатĕрне мăн аслашшĕ мĕнле «итлеттерни» пирки тавçăрмалли кăна юлать паян. Вĕсене пуçласа алла илнĕ чухне Николай шăпах мăнукĕсен çулĕсенче, вун пиллĕкре, пулнă. Çавăн чухнех вăл амăшĕсĕр тăрса юлнă, унăн виллине Ишекрен хулана илсе килсе тирпейлесе пытарма тивнĕ. Салана вĕсем текех таврăнман.

«Ку – фотоаппарат объективĕпе кадр хушшинчи инçĕше виçмелли хатĕр, çакă – Александр усă курнă фотоаппарат, ку – Георгийĕн», – ăнлантарать Алексей Борзов.

→ 9

Тĕсĕнет

Вулакан ыйтнипе «Таван Ен» хаçат редакцийĕ Ишлей РайПОвĕ урлă кăçалхи июль уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтарăва малалла тăсать. Апрель уйăхĕнче кăна кашни квитанци хуçине сутуçăсем элитлă вăрлăх парнелеççĕ. «Таван Ен» калчисем парка çитĕннине курса ĕненес килет-и – эппин ял лавккине çул тытăр, тăвансем!

Кашни çыннăнах тăван ен пур, район çыннисен «Тăван Ен» пур

Владимир ЕМЕЛЬЯНОВ,
Йăршу

ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ Александр Иванов – патшалăх пулăшăвĕсен пĕрлехи порталĕ çинчи ансатлăх, перекетлĕх майĕсем çинчен Интервью →5 стр

• РЕСПУБЛИКĂРА

ЧĂВАШ ЕНРЕ ВĔРЕНТӲ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕМПЕ ÇАМРĂКСЕН ШЫРАВ ПĔРЛЕШĔВĔСЕМ 2017 çултанпа Чăваш Республикин Пуçлăхĕн грантне çĕнсе илме пултараççĕ. Кăçал конкурса тăратнă 21 заявкăран 6-шĕ çĕнтерӳçĕсен ретне лекнĕ. Грантсене Тăван çĕршыва хӳтĕлесе паттăрăн вилнĕ çар çыннисене пытарнă вырăнсене сыхласа хăварма тата йĕркене кĕртме, çапăçусем пынă вырăнсенче асăну паллисем тата мемориал музейсем йĕркелеме усă курĕç. «Республика Пуçлăхĕн грончĕ – питĕ тĕрĕс пуçарулăх. Çак укçа-тенкĕ республикăра шырав юхăмне аталантарма пулăшĕ. Музей Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи совет салтакĕсен паттăрлăхĕ çинчен, Çĕнтерӳ хакĕпе тĕрĕслĕхĕ çинчен каласа кăтартĕ, ачасемпе çамрăксене Тăван çĕршыва юратма вĕрентĕ, патриотла воспитани парĕ», – палăртнă гранта тивĕçнисенчен пĕри – И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика университечĕ çумĕнчи «Память» шырав отрячĕн обществăлла организаци канашĕн председателĕ Николай Мясников.

АПРЕЛĔН 3-МĔШĔНЧЕ ШУПАШКАРТИ ТРАКТОР ТĂВАКАНСЕН КЕРМЕНĔНЧЕ РФ ÇАРĔÇ КОМИССАРИАЧĔСЕМ ЙĔРКЕЛЕННĔРЕНПЕ ÇĔР ÇУЛ ÇИТНИНЕ ХАЛАЛЛАСА САВĂНĂÇЛĂ МЕРОПРИЯТИ ИРТНĔ. Çар комиссариатĕнче ĕçлекенсене саламлама Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çитнĕ. «Паян залра сирĕнпе пĕрле кадетсем, юноармеецсем, пирĕн çĕршыв пуласлăхĕшĕн чун-чĕрепе çунакансем лараççĕ», – тенĕ вăл. Регион пуçлăхĕ военкомат ветеранĕсене уйрăм тав сăмахĕ каланă. Вĕсем çамрăк сотрудниксемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче.

ЧР çарĕç комиссарĕ Александр Мокрушин тытăм йĕркеленнĕ пĕрремĕш кунранах Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсене хатĕрлес пархатарлă тивĕçе пурнăçланине палăртнă. Вăл РФ оборона министрĕн Сергей Шойгун салам çырăвне вуласа панă. Профессири пысăк çитĕнӳсемшĕн военкомат ĕçченĕсене ЧР Пуçлăхĕн Тав хучĕсемпе, «Çар комиссариатне 100 çул» тата ытти наградăпа палăртнă. Савăнăçлă мероприяти концертпа вĕçленнĕ.

www.tavanen.ru Апрель 5 - 11, 2018 Таван Ен № 13 (106245-106246)

Тоёхиса КОДЗУКИ,
Японин Раççейри Чрезвычайлă тата Полномочиллĕ Посолĕ:

– Эпир курса тăратпăр – регион вăйлă аталаннине, сĕршыври инвестици климачĕн наци рейтингĕнче те Раççейĕн 85 субъекчĕ хушшинче 2-мĕш вырăнта тăнине. Çакă – питĕ пысăк çитĕнӳ, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх, паха ĕç опытне хамăр тăрăхра тĕпе хума тăрăшăпăр.

МАРТĂН 29-МĔШĔНЧЕ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЕ РЕГИОН ПУÇЛĂХĔН МИХАИЛ ИГНАТЬЕВĂН ЙЫХРАВĔПЕ ЯПОНИН РАÇÇЕЙРИ ЧРЕЗВЫЧАЙЛĂ ТАТА ПОЛНОМОЧИЛЛĔ ПОСОЛĔ ТОЁХИСА КОДЗУКИ ОФИЦИАЛЛĂ ВИЗИТПА КИЛНĔ. Çак кунах Михаил Игнатьев Посолпа тĕл пулнă. «Пирĕн çĕр айĕнчи пурлăх çук, эпир ĕçлеме юратакан халăхпа пуян», – палăртнă Михаил Васильевич. Икĕ ен хутшăнăвĕсем аталанса вăй илсе пынипе кăмăллă пулнине асăннă регион ертӳçи. Японипе Чăваш Ен хушшинчи тулашри суту-илӳ çаврăнăшĕн калăпăшĕ кашни çулах ӳссе пырать. 2017 çулта вăл 9,8 млн АПШ долларĕпе танлашнă. Çакă висĕм çулхипе танлаштарсан 12,7 хут нумайрах.

Японин Раççейри Чрезвычайлă тата Полномочиллĕ Посолĕ Тоёхиса Кодзуки 2018 çулта Мускаврa Раççей тата Япони çулталăкне уçма палăртни çинчен пĕлтернĕ. Çак кун калаçăва Японин Раççейри Посольствин министрĕ Хироси Тадзима, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин хутшăннă.

Делегаци республикăри пысăк предприятисен – «Акконд» АО, «ЧЭАЗ» АО, «ЭКРА» ООО НПП, «Сеспель» ЧП» ЗАО – ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă. «Эсир кадр ыйтăвне пысăк тимлĕх уйăратăр – ку пĕрремĕшĕ. Технологие кăна мар, пысăк профессионалсем хатĕрлес ĕçе те тĕпе хуни куç кĕретех. Иккĕмĕшĕнчен – таварсен пахалăхĕн ыйтăвне те куçран вĕçертменни паллă, гаранти – 25 çуллăх! Виççĕмĕшĕнчен – çĕнĕлле ĕçсене пурнăçа кĕртни курăнать. Çаксем пĕтĕмпех пире, çав шутрах мана та тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕç», – тенĕ сумлă хăна.

Мартăн 30-мĕшĕнче Японирен килнĕ делегаци «Чувашторгтехника» АУО, «Кванториум» ачапăча технопаркĕнче, Наци музейĕнче пулнă.

УЯВ САЛАМĔ

Михаил ИГНАТЬЕВ,
Чăваш Республикин Пуçлăхĕ

Чăваш Енĕн хисеплĕ çыннисем!

Православи тĕнне ĕненекен мĕн пур çынна Мăнкун ячĕпе ăшшăн тата чун-чĕререн саламлатăп!

Христосăн Çутă Чĕрĕлĕвĕ – христиан тĕнчи паллă тăвакан чи сумлă уявсенчен пĕри. Вăл пурнăç çĕнелсе вăй илнине сăнарлать, пирĕн çемьесене ĕненӳ çуттине парнелет, чĕресене вĕççĕр-хĕрсĕр юратупа тата шанăçпа тултарать, ырă ĕçсем тума тата пархатарлă тĕллевсемпе çунатланма хавхалантарать.

Мăнкун уявĕ турра ĕненекенсемшĕн кăна мар, çавăн пекех пирĕн халăхăн нумай ĕмĕре тăсăлакан ăс-хакăл культурине, унăн пуян йăли-йĕркипе кăмăлсипет никĕсĕсене пысăка хурса хаклакан кашни çыншăнах пĕлтерĕшлĕ. Мăнкун çынсене пĕр чăмăра пĕрлешме, вĕсен чунлăхне аталантарма, ырăлăхпа çынлăх идеалĕсем патнелле туртăнма пулăшать.

Христиан тĕнĕн ырă йăлине пăхăнса эпир çак кун мĕн пур ĕçпе куллен хи хĕвĕшӳ çинчен манма, хамăрăн туйăмсемпе шухăш-ĕмĕте тасатма тăрăшатпăр тата çывăх çынсемпе, тăвансемпе пĕрле пурнăç çĕнтерĕвĕшĕн савăнатпăр.

Сире пĕтĕм чĕререн тăнăçлăхпа çураçулăх, чун хавалĕпе çирĕп сывлăх, ырлăхпа çитĕнӳсем тата Турă пулăшăвне туйма сунатăп!

Хыпарсем е ыйтусем пулсан

8 (83540) 2-21-88
телефонпа шăнкăравлăр

Конвертри ĕç укçи – тарçăсем валли çеç

● РЕЙД

Патшалăх пулăшăвне шанма май пур çĕртех предпринимательсем мĕншĕн «сăрă» схемăсене суйлаççĕ?

Кашни тĕрĕслев хыççăн – акт

Ĕçне-хĕлне «сăрă» схемăпа, хăйсем патĕнче вăй хуракансемпе хутшăнусене документпа çирĕплетмесĕр йĕркелекен предпринимательсемпе кĕрешекен комисси висĕмкун черетлĕ рейда тухрĕ. Унăн йышĕнче районадминистраци экономика пайĕн специалисчĕ Николай Пименов, налог службин аслă инспекторĕ Алена Григорьева тата районти халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Олег Александров пулчĕç. Вĕсемпе пĕрле Кӳкеç поселокĕнчи Шоршелская урамра вырнаçнă пĕчĕк предпринимательлĕх объекчĕсене тата «конечкăри» пĕр лавккана пирĕн журналист та çитсе килчĕ.

Чи малтанах комисси Шоршелская урамри 6-мĕш çуртра вырнаçнă «Шиномонтажра» чарăнчĕ. Автомашина кустăрмине самантлăха та алăран яман арçын кунта пĕччене вăй хунине, унпа ĕç килĕшĕвĕ тунине пĕлтерчĕ. «Ĕç укçи мĕн чухлĕ?» – кăсăкланчĕ налог службин ĕçченĕ. «Хĕлле сахалрах тухать, çулла нумайрах пуласса шанатăп», – пуçне çĕклемесĕр, куçран пăхмасăр хуравларĕ ĕçлĕ арçын. Ирхи улттăран пуçласа каçхи вун пĕрччен кунта тăрăшнине пĕлтерчĕ вăл. Ĕç укçи висçи пирки вара чăннине каларĕши? Иккĕленӳллĕ... 7 пин тенкĕпе вăй питти арçын иртен пуçласа сĕм-çĕрлеччен ĕçлеме килĕшет-ши? Ватлăх çитсен мĕнле пенси кĕтет-ши вĕсене? Ĕç укçине конвертпа илсе тăма килĕшекен çын хăй чухламасăрах чуралăха кĕрсе ӳкет, вăл ыранхи кун пирки шухăшламасть те тейĕн. Тĕрĕслев актне иккĕленеиккĕлене алă пусрĕ арçын – çакна ăнланчĕ тейĕн.

Çак картишĕнчи автомашинăсем юсакан мастерскоя та кĕрсе тухрĕ комисси. Предприниматель хăй пĕччене ĕçлесе ĕлкĕрнине ĕнентерчĕ. Хăйне хăюллă тытаканскер ыйтусене татăклăн хуравларĕ. «Пулăшакансем кирлĕ мар-и?» – кăсăкланчĕ Олег Иванович, халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр специалистсене сĕнме хатĕрри пирки систерсе. Анчах мастерскойра вăл пĕччен марччĕ. «Пуçана», – терĕ вăл тăванĕ енне сĕлтсе. Хăйне хушăран пулăшкалакан пур иккен. Комисси членĕсем кирек мĕнле ĕç хутшăнăвĕсене те документпа çирĕплетмеллине, унсăрăн штраф тӳлеме тивессе аса илтерчĕç.

Тепĕр уйрăм предприниматель, строительство таварĕсен суту-илӳ вырăнне нумай пулмасть уçнăскер, пĕччен тăрăшать. Юнашарах тулли мар яваплăхлă общество та çавăн пек таварсемпех суту-илӳ тăвать. Унта вара ертӳçĕсĕр пуçне тепĕр 3 çын вăй хурать, вĕсемпе ĕç килĕшĕвне йĕркеленĕ – ĕнентерет унăн ертӳçи. Ĕç укçи 10-12 пин тенкĕрен кая мар, ăна тата ӳстерес тĕллевлĕ.

Асăннă урамри пĕр автомойкăна çитсен потребитель кĕтесĕ те, хуçи те курăнмарĕ. Машинăсем çăвакан çамрăк каччă комисси членĕсен ыйтăвĕсене хуравланă май ĕç параканăн хушамачĕпе ашшĕ ятне те аса илеймерĕ.

→4

СĂМАХ МАЙ

«Сăрă схемăсемпе» ĕçлекен предпринимательсен ĕçлĕ хутшăнусене документпа çирĕплетменшĕн çакăн пек явап тытма лекет: должноçри сăпатсене пĕр пин тенкĕрен тытăнса 2 пин тенкĕ таран, юридици пĕлĕвĕсĕр предпринимательсене 5 пин тенкĕрен тытăнса 10 пин тенкĕ таран, юридици сăпачĕллисене 50 пин тенкĕрен тытăнса 100 пин тенкĕ таран штрафлама пултараççĕ. Çулталăк пуçланнăранпа комисси районта ĕçлĕ хутшăнусене документпа çирĕплетмен 16 тĕслĕхе тупса палăртнă.

Пуçарулăха – симĕс çутă

Ял пуласлăхĕшĕн хамăрах яваплă

● ÇИВĔЧ ЫЙТУ

Халăх пуçарулăхĕ çинче никĕсленнĕ бюджет программин чылай проектне Республика кунĕ тĕлне пурнăçа кĕртмелле – кун пирки тунтикун райадминистрацин лару залĕнче иртнĕ планеркăра ял хуçалăх тата экологи уйрăмĕн пуçлăхĕн çумĕ Светлана Иванова пĕлтернĕ.

2018 çулта проектсене пурнăçа кĕртме республика бюджетĕнчен 111 млн тенкĕ уйăрма палăртнă. Чăваш Республикин ял хуçалăх министерстви хальлĕхе конкурса тăратнă 210 ĕçе пăхса тухнă, районти ял тăрăхĕсен 12 проектне ырланă. Вĕсен пĕтĕмĕшле хакĕ 15,2 млн тенкĕпе танлашать, çав шутра 9,5 млн тенке республика бюджетĕнчен уйăраççĕ. Проектсем шывпа тивĕçтерекен объектсене юсассипе (5 проект), çулсем çинче юсав ĕçĕсем ирттерессипе(5), çăвана йĕркене кĕртессипе (1), пушар постне йĕркелессипе тата унта юсав ĕçĕсем ирттерессипе (1) çыхăннă. Вĕсемпе килĕшӳллĕн район территорийĕнче çакăн пек ĕçсем пурнăçлĕç: Янăш ял тăрăхĕнчи Мăн Мамăш çăви çинче çурт (çумăртан тата çанталăкăн ытти пулăмĕнчен хӳтĕленме) лартĕç, Çĕньял-Покровски ял тăрăхĕнчи Пархикасси ялĕнчи Октябрьская урамра тата Сарапакасси ял тăрăхĕнчи Колешша ялĕнче шыв башнисене юсĕç, Шемшер ял тăрăхĕнчи Çутпылăх ялĕнче шыв пăрăхĕсен пĕр участокĕнче юсав ĕçĕсем ирттерĕç, Кăшавăш ял тăрăхĕнчи Кăрмăш ялĕнче пушар постне йĕркелĕç тата юсав ĕçĕсем ирттерĕç, Тутаркасси ял тăрăхĕнчи Çăкалăхъялта шыв башнине юсĕç, Атайкасси ял тăрăхĕнчи Атайкасси ялĕнчи Московская урамра шыв пăрăхĕсене хурĕç, Чăрăшкасси ял тăрăхĕнчи Чанкасси ялĕнче, Çырмапуç ял тăрăхĕнчи Платка ялĕнче, Çĕньял ял тăрăхĕнчи Çĕньялти Центральная урамра, Лапсар ял тăрăхĕнчи Вăрманкас ялĕнчи Гражданская, Мир тата Çĕнтерӳ урамĕсенче çулсене юсĕç, Кӳкеçри Восточная урамра асфальт сарĕç. Кăшавăш ял тăрăхĕнчи пушар посчĕ ял тăрăхĕнче пурăнакансене кăна мар, кӳршĕ ял тăрăхĕсене те – Çĕньял-Покровски, Сарапакасси, Ишлей – пулăшу кӳме хатĕр пулĕ. Уншăн 900 çын ытла алă пуснă, укçа-тенкĕ енчен хăйсен тӳпине хывма килĕшнĕ.

Инициативлă бюджет программине хутшăнма ытти ял тăрăхĕ те кая юлман, конкурсăн 2-мĕш тапхăрне хутшăнас текенсенчен заявкăсене апрелĕн 17-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Аса илтерер: 2017 çулта районти ял тăрăхĕсен 8 проекчĕ конкурс витĕр ăнăçлă тухнă. Халăх пулăшăвĕпе Атайкассинчи Заводская тата Хуторская урамсенче шыв пăрăхĕсене хывнă, Мошкассинче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса палăк лартнă, Ишекре, Шорккара, Пархикассинче шыв башнисене улăштарнă, Чăрăшкассинчи çамрăксен çурчĕн тăррине ылмаштарнă, Чĕркашра шыв пăрăхĕсене хывнă. 2017 çулта конкурс витĕр тухнă, анчах çанталăк условийĕсене пула пурнăçа кĕреймен тепĕр проект та, вăл укçа-тенкĕ енчен пăхсан чи калăпăшли – кăçал пурнăçланмалла. Ку вăл – Кăшавăш ял тăрăхĕнчи Мăнал салинче Школьная урама тирпейилем, хăтлăх кĕртмелли проект. Унăн хакĕ – 3 млн тенкĕ ытла.

Çакна палăртмалла: халăх пуçарăвĕ çинче никĕсленнĕ программăпа килĕшӳллĕн проекта пурнăçа кĕртме укçа-тенкĕн 60%-не республика бюджетĕнчен уйăраççĕ, ытти – ял тăрăх бюджетĕнчен тата халăхран. Ял тăрăх администрацийĕ конкурса хутшăнма çулталăкра пĕр заявка кăна пама пултарать. «Ял тăрăхĕсенчен чылайăшĕ çак проектпа ĕçлеме пуçларĕ. Чăннипех те лайăх программа. Енчен те çынсем вырăнти ĕçсене унччен хăйсен вăйĕпе пурнăçлама тăрăшнă пулсан, халĕ вĕсен программăна лекме шанăç пур», – палăртнă райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыракан Зоя Маслова, ял тăрăхĕсене программăна хастартарах хутшăнма, çынсемпе тачă çыхăнса ĕçлеме хавхалантарса.

ДЕОМИД ВАСИЛЬЕВ

● ЫЙТУ-ХУРАВ

Тӳрĕ килĕшӳсем

? Коммуналлă пулăшусемпе усă куракансене ресурссемпе тивĕçтерекен организацисемпе тӳрĕ килĕшӳсем тума ирĕк паракан закона йышăннине илтрĕм. Сынсен çакăн пек килĕшӳсем тăвас тесе мĕн тумалла?

■ *Клавдия САРМОСОВА, Тутаркасси*

Геннадий ЕФИМОВ, райадминистрацин сурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх уйрăмĕн ертӳçи:

– Кăçалхи март вĕçĕнче РФ Патшалăх Думин депутачĕсем хваттер хуçисене ресурссемпе тивĕçтерекен организацисемпе коммуналлă пулăшушăн тӳрĕ килĕшӳ тума май паракан закона пĕр саслăн йышăнчĕç. Вăл апрелĕн 3-мĕшĕнчен вăя кĕчĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тунтикун влаç органĕсемпе ирттернĕ планеркăра темиçе çул каялла республикăра тӳрĕ кăмăллă мар управляющи компанисем ĕçленине, вĕсем коммуналлă пулăшушăн тӳлекенсенчен укçа-тенке ултавлă схемăсемпе пуçтарнине асăннă. Пуçлăх çĕнĕлĕхсем коммуналлă пулăшăвăн тӳлевне уçăрах тăвасса тата укçа-тенке нумайрах пухма май парасса çирĕп шаннине пĕлтернĕ.

Хваттер хуçисен ресурссемпе тивĕçтерекен организацисемпе сивĕ тата вĕри шывпа, ăшăпа тивĕçтернĕшĕн, таса мар шыва юхтарса кăларнăшăн тата хытă каяшсене илсе тухнăшăн тӳрĕ килĕшӳсем тума май пур. Енчен те управляющи компанин ресурспа тивĕçтерекен организаци умĕнче 2 тата ытларах уйăхшăн парăм пулсан, поставщик ресурспа тивĕçтерес килĕшӳрен хăй тĕллĕн хăтăлма тата çынсемпе хăй тĕллĕн килĕшӳ тума пултарать. Опыт кăтартса панă тăрăх, тӳрĕ хутшăнусем коммуналлă пулăшушăн тӳлемелли укçа-тенке нумайрах пуçтарма май параççĕ. Ку схема – çĕнĕлĕх мар, нумай хулара кунпа ĕçлеççĕ, анчах та Çурт-йĕр кодексĕнче ун пирки хальччен çырман. Çавăнпа та килĕшӳсен законлăхĕ пирки иккĕленнĕ.

Хваттер хуçисен ресурссемпе тивĕçтерекен организацисемпе килĕшӳ тăвас тесен, унта çакăн пирки йышăнни çителĕклĕ. Управляющи компани, малтанхи пекех, коммуналлă пулăшу пахалăхĕн шайĕпе çыхăннă ыйтусене йышăнмалли «пĕр чӳрече» пулса юлать, мĕншĕн тесен чылай ыйту çуртри инженери инфраструктурисемпе çыхăннă. Унсăр пуçне управляющи компани те яланах юнашар.

Енчен те хваттер хуçисене хăйсен управляющи компанийĕн ĕçĕ тивĕçтерет пулсан вĕсем коммуналлă ресурссемпе тивĕçтерекен организацисемпе тӳрĕ килĕшӳсем тумасан та пултараççĕ. ■

Пушă çурт – ача вăййи валли мар

? Поселокри Марпосадская урамри 12-мĕш çуртра пурăнакансене çĕнĕ хваттерпе тивĕçтернĕренпе пушанса юлнă çурт юхăнса тăрать. Унтах ача-пăча выляса çӳрет, çавăнтах кантăксем йăваланса выртаççĕ. Çурта хăçан пăсма шухăшлаççĕ?

■ *Марпосадская урамри 10-мĕш çуртра пурăнакансем*

Владимир ВЕРШИНИН, Кӳкеç ял тăрăх пуçлăхĕ:

– Марпосадская урамри авариллĕ 12-мĕш çуртра пурăнакансене 2 тапхăрпа пурăнмалли вырăнпа тивĕçтернĕ. Пĕрисене 2015 çулта хваттерсем пачĕç, теприсем 2017 çулта сентябрĕн малтанхи кунĕсенче уçăллă пулчĕç. Унтанпа асăннă çурт пушă ларать. Ăна пăсас ыйтăва татса панă, пĕр индивидуаллă предпринимательпе килĕшӳ тунă. Ун тăрăх, майăн 31-мĕшĕччен çав çурта тирпейлесе танлаштармалла. ■

УЯВ САЛАМĔ

Николай ХОРАСЕВ, Шупашкар район пуçлăхĕ

Ⓟ 04-14

Шупашкар районĕн хисеплĕ çыннисем!

Православи тĕнне ĕненекенсене чун-чĕререн Христос чĕрĕлнин уявĕпе – Таса Мăнкунпа саламлатпăр! Çак уяв тĕнчен тата этемлĕхĕн çăлăнăçне, пурнăç, ырăлăх тата çутă çĕнтерĕвне сăнарлать. Вăл пире çывăх çынсен юратăвĕ çинче никĕсленнĕ турра ĕненекенсен хаклăхне аса илтерет, çыннăн чи лайăх енĕсене уçать, чун пархатарĕ енчен ӳсме пулăшать.

Мăнкунра таса шухăшсемпе чиркĕве çӳреççĕ, чи çывăх та хаклă çынсемпе тĕл пулса уяв сĕтелĕ хушшинче пĕр-пĕрне телей, сывлăх, ăнăçу сунаççĕ. Çакна пула халăхра пĕрлĕх туйăмĕ çирĕпленет.

Мăнкунăн çутă уявĕ сирĕн чĕрĕре ырă туйăмсемпе, çутă савăнăçпа тултартăр, ăшăлăх тата пархатарлă шухăшсем илсе килтĕр! Ырăлăха ĕненнипе кăна эпир пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерме пултаратпăр.

Сире тата çемйĕрсене тăнăç пурнăç, ырăлăх, телей тата ăнăçу сунатпăр. Христос чĕрĕлнĕ!

Владимир ДИМИТРИЕВ, райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ

Апрелĕн 8-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчери православи тĕнне ĕненекенсемшĕн Мăнкун уявĕ пуçланать. Йăлана кĕнĕ йĕркепе çак кун республикăри чиркӳсенче Мăнкун кĕллисем иртеççĕ. Апрелĕн 7-мĕшĕнчен 8-мĕшне куçнă каç Чăваш наци телерадиокомпанийĕ Шупашкарти Покровпа Татианински собортан Мăнкун кĕллине тӳрĕ эфирпа кăтартĕ. Уяв литургине Чăваш митрополийĕн Пуçлăхĕ, Чăваш тата Шупашкар митрополичĕ Варнава ерсе пырĕ. Трансляци апрелĕн 7-мĕшĕнче 23:30 сехетре пуçланать.

Хул пуççи çинчи пакун – чыс-сум

● КУÇА-КУÇĂН

Раççейре çурхи призыв тапхăрĕ пуçланчĕ. Кăçал пĕтĕм çĕршывĕпе 128 пин яш-кĕрĕм салтак атти тăхăнма хатĕрленет. Шупашкар районĕнче 53 çынна çара кайма ят тухĕ. Тăван çĕршыв сыхăлăхĕшĕн чи малтанах яваплă тытăм – Çар ĕç комиссариачĕ йĕркеленнĕренпе 100 çитнине халлланă уяв умĕн çурхи кампани çĕнĕлĕхĕсем пирки ыйтса пĕлме Чăваш Республикин çарĕç комиссариачĕн Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи уйрăмĕн çар комиссарĕпе Александр КОЧУРОВПА тĕл пултăмăр.

– Александр Алексеевич, çурхи призыван пĕрремĕш кунĕсем çамрăк ăрăва çара ăсатассишĕн тимлекен çынсен професси уявĕпе тĕл килеççĕ. Мĕнлерех вăл, çар комиссариатĕнче вăй хуракан, унăн мĕнле ĕçсене пурнăçлама тивет – каласа парăр-ха.

– Апрелĕн 8-мĕшĕнче çар комиссариачĕсен тытăмне йĕркеленĕренпе çĕр çул çитет. Законодательствăпа килĕшӳллĕн военкомат çара илессипе çыхăннă пĕтĕм мероприятие йĕркелесе ирттерессишĕн яваплă. Анчах çар комиссариачĕ – призыв пункчĕ кăна мар. Çар учечĕпе, мобилизаци хатĕрлĕхĕпе тивĕçтеретпĕр тата социаллă ыйтусене те татса паратпăр эпир. Вăрçă участникĕсене, тăлăх арăмсене, Çӳрçĕр Кавказри хирĕçтăрусене хутшăннисене йышăнатпăр, çар ретне тĕрлĕ вăхăтра тăнисем пирки пĕтĕм сведени пирĕн патра упранать.

– Апрелĕн 1-мĕшĕнче пуçланнă çурхи призыв июлĕн 15-мĕшĕччен пырĕ. Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн çакăн пирки калакан Хушăвне информаципе право порталĕнче мартăн 30-мĕшĕнче пичетленĕ. Яшкĕрĕме çара илессипе çыхăннă законодательствăна хăш-пĕр улшăнăва кĕртни те паллă. Вĕсем кама пырса тивеççĕ-ха?

– Çар службин сумлăхĕ ӳсет. Унччен сывлăх енчен çара юрăхлах пулманнипе ун ретне тăманнисем тата запаса тухнисем паян çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçлама хатĕррине пĕлтереççĕ. Чылайăшĕ сывлăхне лайăхлатнă пулсан та законодательство вĕсене çара илме ирĕк паман. Çакă професси суйланă чухне те, ĕçе вырнаçнă чухне те ура хунине ăнланса пăлханакансем нумайланчĕç. Çулталăк вĕçĕнче РФ Президенчĕ Владимир Путин алă пуснă указ ку çитменлĕхе пĕтерме тивĕç. Унпа килĕшӳллĕн граждансем 27 çул тултарсан та медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухнă хыççăн çар ретне тăма пултараççĕ. Служба хыççăн вĕсем валли МЧСа, ФСБна тата ытти вăй структурине çул уçăлать. Пĕр тĕслĕх те илсе кăтартас килет. Янăш ял тăрăхĕнчи Борис Масленникова çара илмерĕç. Унăн ашшĕ шалти ĕçсен районти уйрăмĕнче ĕçлет. Вăл ыйтнипе каччă медицина тĕрĕслевĕ витĕр тепĕр хут тухрĕ, унччен лартнă диагноз çирĕпленмерĕ. Бориса çара илчĕç, вăл контрактпа икĕ çул Çӳрçĕр флотĕнче службăра тăчĕ. Халĕ ăна тата виçĕ çуллăха тăсрĕ.

– Призывникăн психологи тĕлĕшĕнчи уйрăмлăхĕсене яланах шута илнĕ. Малашне мĕнле пулĕ?

– Федерацин «Çар яваплăхĕ тата çар службин çинчен» саккунĕнчи профессие психологи тĕлĕшĕнчен суйлассине пырса тивекен пая улшăнусем кĕртнĕ. Вăл граждансене çар службине хатĕрленĕ, салтака илнĕ чухне никĕс пулса тăрать. Унăн пĕтĕмлетĕвĕсене призыв комиссийĕ каччăн службă вырăнне, çара палăртнă чухне те шута илĕ.

– Республикăри çарĕç комиссариачĕн Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи уйрăмĕнче кăçал миçе çын учетра тăрать?

– 1660 яхăн яш-кĕрĕм. Вĕсенчен 78-шĕ çурхи призывпа çара кайĕ, пĕтĕмĕшле шутран 4,8 процент çеç ку. Çакă мĕнпе çыхăннă тетĕр-и? Призывниксен ытларах пайĕ аслă пĕлӳ е вăтам професси пĕлĕвĕ илнипе каярах повестка илĕ, сывлăх енчен хавшакраххисене, судпа айăпланнисене те çар ретне йышăнаймастпăр. Çемьери йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкнисене те. Апрель уйăхĕнче салтак атти тăхăнма хатĕррисем нумайччĕ. Футбол енĕпе иртекен тĕнче чемпионатĕнче йĕркелĕхпе тивĕçтермешкĕн наци гвардине лекес текенсем йышлăччĕ. Анчах çамрăксем те июль варриччен вĕренеççĕ. Вĕсем алла диплом илнĕ чухне призыв тапхăрĕ те вĕçленет. Сывлăх енчен пăхас пулсан, призывниксен медицина комиссийĕ витĕр тухнă чухне сколиоз, лапă ура, шăмăпа мышца тытăмĕн чир-чĕрĕсене ытларах тупса палăртаççĕ. Куç çивĕчлĕхĕ çитĕлĕксĕрри те анлă сарăлнă.

– Район каччисем хĕсметре ăçта тăраççĕ?

– Çар тинĕс флотне, стратеги пĕлтерĕшлĕ ракета çарне, сывлăш десант çарне, спецназа, тип çĕр çарне, наци гвардине лайăххисенчен лайăххисем лекеççĕ. 10 çынран унта 2-3 çынна кăна уйăрса илеççĕ. Сумлă çарта службăра тăма тӳр килнĕшĕн демобилизациленсен каччăсем тав сăмахĕ те каласçĕ. Çара каякан кашни призывникшăн яваплăха туятпăр. Ăсатнă чухне кашнине хамăн телефон номерне паратăп. Мĕн те пулсан сиксе тухсан, уставра палăртман ĕç-пуç тума хистесен вĕсем кирек хăш вăхăтра пирĕнпе сыхăнма пултараççĕ.

– Контрактпа службăна кайма çамрăксене мĕн хистет?

– Чи малтанах контрактнике пурăнма «тăваткал метрсем» уйăрса параççĕ, вăл ăна ипотека урлă харпăрлăха куçарма пултарать. Çар çынни кăна мар, унăн çемье членĕсем те тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕпе усă кураяççĕ. Службăра тăнă вăхăтра салтака çи-пуçпа тата техника хатĕрĕсемпе тивĕçтереççĕ. Инçет Хĕвел тухăçĕнче тата Инçетри Çӳрçĕрте службăра тăракансене вырăна самолетпа е поездпа çитме укçа-тенкĕ уйăрса параççĕ. Чи пĕлтерĕшли вара – унăн ыранхи кунра шанăç пур: вăл должноçа кура ĕç укçи илет. Кашни çул Шупашкар районĕнчен 40-45 çамрăк контрактпа службăра тăрать. Республикăра район контракт службипе 2-мĕш вырăнта. Контрактниксем хушшинче вăтам професси пĕлĕвĕ илнисем нумайăн. Контрактпа çара каяс текенсем виçĕ уйăх тĕрĕслев срокĕ витĕр тухаççĕ. Килĕшсен малалла службăна тăсаççĕ, çук тăк – призывпа. Акă Ишлей каччи Кирилл Мухин контрактпа спецназра (ГРУ) икĕ çул службăра тăчĕ. Аслă шкулта юрист профессине илнĕскер салтак аттине хывсан Шупашкар хула пуçлăхĕн çумĕнче ĕçлеме пуçланине палăртмалла. Нумаях пулмасть ăна, патвар кĕлеткеллĕскере, тĕл пулсан палласа та илеймерĕм.

– Çара каясран тарса çӳрекенсем пур-и?

– Çукпа пĕрех. Кунта ун пеккисен йышне камсем кĕнине уçăмлатмалла. Повестка илсе медкомисси витĕр тухнă хыççăн çара кайма юрăхлă тесе йышăннă çĕртех тивĕçлĕ сăлтавсăр тарса çӳрекенсем уклонистсен йышне кĕреççĕ. Çара каясран саккунсăр майпа хăтăлса юлни те – преступлени. Çакăншăн РФ УК 328-мĕш статйипе килĕшӳллĕн яваплăх пăхса хунă. Çар ретне тăрассинчен тарса çӳрекене 200 пин тенкĕ таран штрафлама та пултараççĕ. Чи çирĕп яваплăх вара – икĕ çул таран ирĕкрен хăтарни.

– Аслă çар шкулĕсене вĕренме кĕрес текенсен йышĕнче хĕрсем пур-и?

– Хальлĕхе районта 23 çамрăк пурнăçне çар профессийĕпе çыхăнтарма кăмăл турĕ, вĕсен хушшинче хĕрсем те пур.

– Çара паян мĕнле специалистсем кирлĕ?

–ДОСААФ организацийĕсемпе тачă çыхăну тытатпăр. Унта С, Д, Е категориллĕ водительсене, çар чăсне дизель генераторĕпе тивĕçтерме пултаракан механиксене хатĕрлеççĕ. Десант валли стрелок-парашютистсене хатĕрлесси анлă сарăлчĕ. Ун пеккисене тӳрех сывлăш десант çарне илеççĕ.

– Александр Алексеевич, эсир çамрăк ăрупа çарпа патриот ĕçне те ирттеретĕр. Пулас салтаксене мĕн суннă пулăттăр?

– Арçыннăн çак пурнăçра икĕ тивĕç: ăрăва малалла тăсасси тата Тăван çĕршыва хӳтĕлесси. Салтак çĕршыва кăна мар, хăйĕн çемйине, тăван амăшне, ачисене те хӳтĕлет. Салтак пăттине çинĕ хыççăн кăна яш-кĕрĕм чăнчăн арçын ятне илет.

■ АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

СĂМАХ МАЙ

«ИЗВА» ООО çар учетне пурнăçлассипе тата РФ хĕç-пăшаллă вăйсен запасри граждансене броньлассипе иртнĕ çул-хи тĕрĕслев кăтартăвĕсемпе Чăваш Республикинче 2-мĕш вырăн йышăнчĕ.

www.tavanen.ru Апрель 5 - 11, 2018 Таван Ен № 13 (106245-106246)

Çĕнĕ Çĕпĕр хулинчи ентеш

● АЯКРИ ТĂВАН

Ялти çамрăксем яланах инçете туртăнаççĕ. Хăй вăхăтĕнче, чылай яшпа хĕр Шупашкара кăна мар, Союзри пĕтĕм стройкăна ĕçлеме тухса кайнă. Техникум е институт пĕтерекенсем направлениппе час-часах Урала, Çĕпĕре, Инçет Хĕвел тухăçне çул тытатчĕç. Унтах пурăнма юлакансем те пулнă. Ялта ун пеккисене манмаççĕ.

Ю. Кириллов

Юлашки çулсенче Çĕпĕр пĕлтерĕшĕ пирки уйрăмах пысăк каласу пырать. Омск, Новосибирск, Барнаул, Красноярск, Иркутск, Чита малалла аталаннине палăртаççĕ. Çав хуласенче пулса курнă пулсан е унта паллана çынсем пурăнаççĕ пулсан çак ятсем пире пушшех сывăх. Маншăн та çапла.

Çĕньял-Покровскинчи В.Ф. Кириллов ывăлĕ Юрий Сĕнтĕрвăрринче строительство техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн направлениппе Новосибирскри çар чаçĕнче çуртсем хăпартас енĕпе ĕçленĕ. Чаçри темиçе специалиста Ленинградри çар училищине кайма сĕнеççĕ. Вĕсенчен Юрий Кириллов кăна экзаменсене ăнăçлă тытса вĕренме кĕрет. Училище хыççăн вăл хăйĕн чаçне таврăнать. Свердловскри финанс институтне пĕтерсен службăна çар чаçĕн финанс уйрăмĕн пуçлăхĕнче малалла тăсать, майор званине çитет.

Уçă кăмăллă Юрий Васильевич тăван ялти çынсенчен ютшăнмастчĕ. Отпуска килсен пĕрле вĕреннĕ тусĕсем патне кĕрсе тухатчĕ, вĕрентекенсемпе тĕл пулатчĕ. Пĕрре вăл пирĕн аттепе, Кронид Петровичпа, каласа ларнă. Атте вăрçăра пĕрле çапăçнă çĕпĕр çыннисен 22-мĕш гварди дивизийĕ Новосибирскра вырнаçнине пĕлсен, Юра ăна хăнана чĕннĕ, хăйĕн адресне панă. Чăн та, 1980 çулхи май уйăхĕнче атте (вăл ун чух 70 çултаччĕ) Новосибирска вăрçă ветеранĕсен тĕл пулăвне кайрĕ. Самолетпа каçхине çитсе вăл Кирилловсем патĕнче çĕр каçнă, тепĕр кунне «Обь» гостиницăна пурăнма кĕнĕ, уяв мероприятийĕсене хутшăннă. Кирилловсем хăйне лайăх йышăннине, Обь хĕрринче вырнаçнă нумай хутлă çуртсен çутисем шыв çине ӳксе юмахри пек йăлтăртатнине аса илетчĕ вăл. Атте вăрçăра пĕрле пулнă, Новосибирскра пурăнакан тусĕсемпе çыру çӳретрĕ. Конвертсем çинчи урам ячĕсем историпе çыхăннă: Сибирская, Сибиряков-гвардейцев, Линейная, Советская. Кирилловсем Б. Богатков урамĕнче пурăннă.

Пирĕн çемьере Новосибирскра пулса курнисем татах та пур. Манăн Валентина аппан ывăлĕ Александр Андреев 1981-1983 çулсенче çар тивĕçне Новосибирскра пурнăçларĕ. Шăп çак хулана пĕррехинче темиçе кунлăх аппа та хăй ĕçлекен заводран (ЗЭИМ) командировкăна килет. Увольнение тухнă ывăлĕпе пĕрле Кирилловсем патĕнче пулса курать. Ашшĕ пекех ылтăн алăллă пулнă Юрий Васильевич, хваттерти нумай шкап-çӳлĕке хăй тунă теççĕ, урайне çĕнĕрен сарнă, нӳхреп чавнă. Демобилизаци хыççăн та Александр Кирилловсем патĕнче чарăннă. Вĕсен ывăлĕ Евгений питĕ интеллигентлă пулнине ас туса юлнă.

Поездпа Хĕвел тухăçнелле кайнă чух кун вăрăмланнă пек туйăнать – хĕвеле хирĕç кайнăран, паллах. Эпĕ вара Омскран малалла кайса курман, унтан Казахстаналла (целинана) пăрăннă. Çавах Новосибирск çинчен çырма кăмăллă. Вăл Çĕпĕрĕн тĕп хули шутланать-çке. Ăна 1893 çулта Мускав-Алтай чукун çул çинче Александровский ятпа никĕсленĕ. 1903 çулта хула ятне панă, 1926 çулччен вăл Новониколаевск ятпа паллă пулнă. Халĕ хулара 1 млн та 602 пин çын пурăнать. Унта промышленоç питĕ вăйлă аталаннă. Кунта 1957 çултанпа Раççей наука академийĕн Çĕпĕрти уйрăмĕ ĕçлет. Çĕнĕ Çĕпĕрĕн пуласлăхĕ пысăк.

Этем таçта та пурăнма хăнăхать. Тăван çĕршыв çавах пирĕн асра. Евгений Юрьевич Кириллов ашшĕ çуралнă Чăваш çĕрĕнче тымар янă, Çĕнĕ Шупашкарта инженерта ĕçлет. Унăн виçĕ ывăл. Евгений амăшĕ Галина Андреевна (Çĕрпӳ районĕн хĕрĕ) тата йăмăкĕ Ирина Новосибирскрах пурăнаççĕ. Кирилловсен Çĕпĕрте те, Чăвашра та тăван нумай.

ТАМАРА ВЕРЕНДЕЕВА,
ÇĔНЬЯЛ-ПОКРОВСКИ

Иртеççĕ çулсем, юлаççĕ кунсем

● КИВĔ САН ӲКЕРЧĔК

1954 çулхи сăн ӳкерчĕк алла ручка тытма хистерĕ. Çак ачасем урисене çăпата сырса, пир сумкисене кăштах çыртмалли чиксе, йĕпе-сапана пăхмасăр Ишек салинчи шкула васканă. Пушмак таврашĕ çукрах, çăкăр таврашĕнчен те хĕсĕкрех пулнă вăл вăхăтра. Эпĕ çакна хам та лайăх ас тăватăп, çак сăн ӳкерчĕкри ачасемпе пĕр класрах вĕреннĕ çав çулсенче. Шкула çитме 4-5 çухрăм чупаттăмăр. Çуркунне питĕ кансĕрччĕ. Ункă шывĕ урлă хывнă кĕпере кашни çулах сӳтсе илетчĕç, апла тумасан çурхи шыв кĕпере юхтарса кайнă пулĕччĕ. Пăр кайсан кĕпере каялла хуратчĕç. Ĕçĕ çăмăл пулман, вăйпитти арçынсем такмакласах свайсене çапатчĕç. Хальхи вăхăтра унта тимĕрпе бетонран тунă кĕпер хăватлăн курăнса куçа тыткăнлать.

Шкулта вĕреннĕ вăхăтра шыв-шур вăхăтĕнче хăшĕ-пĕри Ишек салинче хваттерте пурăнкалатчĕç. Ӳркенменнисем шкула Чаканар ялĕ патĕнчен çаврăнса килетчĕç. Халĕ ачасене шкул автобусĕпе турттараççĕ. Шкулĕсем пысăк, столовăйĕ, туалечĕ шалтах, хăтлă спортзалĕ кăна мĕне тăрать! Тăрăшса вĕрен кăна!

Сăн ӳкерчĕкре 4-мĕш класс ачисем сăнланнă. Вĕсем халĕ 70-тен иртнĕ ватăсем. Хăшĕ-пĕри пирĕн хушăра текех çук. Çапах та эпир вĕсене яланах асрах тытатпăр. Сăн ӳкерчĕкри ачасем ячĕсем (сулахайран сылтăмалла çӳлтен пуçласа): Володя, Роза, Люба, Тамара, Ира, Клара, Тамара, Лида, Юра, Коля, Нина, Веня, Герман, Вова, Коля тата Христина Дмитриевна вĕрентекен. Мана çак ушкăнри ачасемпе Чăрăшкасси шкулĕнче пĕр класра вĕренме тӳр килнĕ. Эпир питĕ туслă класс пулнă, хуйха-суйха çурмалла пайланă. Класа Неонила Григорьевна Кольцова ертсе пынă. Хураçырма ялĕнченчĕ вăл. Хальхи вăхăтра вăл пирĕн хушăра çук ĕнтĕ. Эпир унăн таса та çутă сăнне асрах тытатпăр, ăна ăшшăн аса илетпĕр.

ВАЛЕНТИН СИНЕЛЬНИКОВ, ЧĂРĂШКАССИ

● ФОТОФАКТ

Хорнсор ялĕнче пурăнакан Михаил Албутов почтальон сумки евĕр почта ешчĕкĕ хатĕрленĕ. Унта хаçат-журнал, çырусем хума, паллах, çав тери кăмăллă. Эсир çапла тăваятăр-и? Çак сăн ӳкерчĕке хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ, Вăрман-Çĕктер ял тăрăх депутачĕ Николай Смирнов тунă.

ХЫПАРСЕНЕ – ЧАТА!

Патшалăх влаç органĕсен ĕçне-хĕлне, çуртйĕрпе коммуналлă тытăма, вĕрентĕве, сывлăх сыхлавне пырса тивекен, пенси тӳлĕвĕпе çыхăннă ыйтусене «Тăван Ен» хаçат редакцине «Вайбер» мобильлĕ приложенипе ярса пама пултаратăр. Хăвăр ял хыпарĕсем пирки те пĕлтерĕр!

8-965-687-44-59.

Конвертри ĕç укçи – тарçăсем валли çеç

● РЕЙД

2

«Серега», – çапла чĕнет вăл хăйне ĕçпе тивĕçтерекене. Предприниматель ячĕ-шывĕ телефонпа çыхăннă хыççăн тин уçăмланчĕ. Çамрăкăн хуравĕсенчен çакă паллă пулчĕ: хутшăнусене ĕç килĕшĕвĕпе çирĕплетнĕ, уйăхра икĕ хутчен шалу тӳлеççĕ. Ĕç укçи пирки ыйтсан пĕлтерме васкамарĕ-ха вăл. «Пурăнма çитет», – терĕ кăна. «15 пин илетĕр-и?» – ыйтрĕ Алена Анатольевна. «Тухать», – çирĕппĕн илтĕнмерĕ каччă сасси. Комисси членĕсем каялла çаврăннăччĕ çеç – предприниматель хăйĕн ĕçченĕ патне шăнкăравласа ячĕ. «Кайрĕç-и?» – телефон трубкинчен уççăнах илтĕнчĕ унăн хумханнă сасси. Алена Григорьева предприяти ертӳçине ĕçлĕ хутшăнусене çирĕплетекен документпа налог службинче кĕтнине пĕлтерчĕ.

Автомобилĕн запас пайĕсене сутакан лавккари тинтерех уйрăм предприниматель пулса тăнă çамрăк тĕрĕслев хăйĕн патне халех çитессе пачах кĕтмен иккен. Тĕрĕслев планпа килĕшӳллĕн иртнине пĕлсен кăна лăпланчĕ пулмалла. Çамрăка урăх çынсене ĕçе илес пулсан хутшăнусене документпа çирĕплетмеллине аса илтерчĕç комисси членĕсем.

Предпринимательсен сутуилӳ вырăнĕсем татах та пур кунта. Анчах комисси тĕрĕслевĕ пирки сараппан радиопа хыпар хăвăртах сарăлать. Алăксем куç умĕнчех хупăнахупăна пычĕç тейĕн. Анчах та çирĕплетнĕ вăхăта пăхăнманни шăпах потребитель прависене хӳтĕлекен закона пăсни пулмасть-и-ха? Çавăнпа та Роспотребнадзор валли те кунта ĕç çителĕклипех.

«Тимĕр-тăмăр туянатпăр» тесе çырнă картише кĕрессĕнччĕ. Хуралçă предприниматель ятне пĕлтермерĕ. «Телефон номерне хăварăр, хуçа хăех шăнкăравлать», – çакăн пек сăмахсемпе алăкне хупрĕ вăл комисси членĕсен умĕнче. Юридици сăпатне адрес тăрăх шыраса тупса налог органне йыхравласси шăл çемми мар терĕ-ши?

Рейд Кӳкеçри Советская урамри пĕр мини-маркетра вĕçленчĕ. Комисси ахальтен мар кунта. Лавкка хуçи сутуçăсем çукки пирки тахçантанпах ӳпкелешет иккен. Анчах та сентресем хыçĕнче хăй мар, шăпах сутуçă тăратчĕ. Вăрăм куç харшиллĕ пике хăй ĕç килĕшĕвĕсĕр вăй хунине те пытармарĕ. «Эпĕ вăхăтлăх кăна ĕçлетĕп», – терĕ вăл айăплăн йăл кулса. Çавăн пек «вăхăтлăх ĕçлекенсем» кунта иккĕн. Ирхи саккăртан тытăнса каçхи тăххăрччен икшер кун урлă вăй хураççĕ пикесем. «700 тенкĕ, 600, 500..?» – пĕр кунхи ĕç укçи пирки ыйтрĕ налог инспекцийĕн ĕçченĕ. «Ну, 500 тейĕпĕр...» – пуçватмăш ваййа аса илтерчĕ вĕсен калаçăвĕ. Нумай ыйтăва хуравсăр, айăплăн кулкаласа ирттерсе тĕрĕслев актне алă пусрĕ çамрăк хĕрарăм.

Ĕç хутшăнăвĕсене документпа çирĕплетмесĕр предпринимательсем хыснана налог тӳлессинчен пăрăнма тăрăшаççĕ. «Конвертпа» паракан ĕç укçи хыçĕнче – бюджета кĕмесĕр çухалнă миллионсем, çĕкленса ларма пултарнă вĕрçĕнĕ шкулсемпе ача сачĕсем, медицина учрежденийĕсем, çĕнĕ хваттерсемпе çуртсем. Çав вăхăтрах патшалăх предпринимательствăн пĕчĕк тата вăтам субъекчĕсене пулăшу пама май тупсах тăрать, кашни çулах çак тĕллевпе çителĕклĕ укçа-тенкĕ пăхса хурать тата илĕртет. 2018 çулхи 3 уйăхра районти 6 предприяти патшалăх пулăшăвне пурĕ 3 млн тенкĕлĕх тивĕçнĕ.

АННА ФИЛИППОВА

● ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

ЯЛ ХУÇАЛĂХ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕНЧЕ ТЕХНИКА ХАТĔРЛЕВĔН ТĔРĔСЛЕВĔ ИРТЕТ. Мартăн 30-мĕшĕнче район комиссийĕ Ленин ячĕллĕ СХПК-колхозра пулнă. Ял хуçалăх предприятийĕн 17 техникинчен 13-шĕ тĕрĕслев витĕр ăнăçлă тухнă. Тепĕр 4-шĕ валли механизаторсем çитмеççĕ. Хуçалăхра сухаламалли тата тырă акмалли техникăна çур акие хатĕрлес ĕç малалла пырать. Паянхи куна сӳресем, культиваторсем уй-хире тухма хатĕр. Хуçалăхра минерал удобренисемпе çунтармалли-сĕрмелли хатĕрсене çителĕклĕ хатĕрленĕ, паяныран вăрлăха им-çамлама тытăнмалла. Хуçалăх ертӳçи Петр Тунгулов пĕлтернĕ тăрăх, çĕр ĕçченĕсем çур аки ĕçĕсене тивĕçлĕ ирттерес тĕллевлĕ.

Новости с пригородным акцентом
Причебоксарье

● В МАСШТАБАХ СТРАНЫ

ИЗМЕНЕНИЯ В РОССИЙСКОМ ЗАКОНОДАТЕЛЬСТВЕ С 1 АПРЕЛЯ:

1. Индексация социальных пенсий. Государство повысит их на 2, 9%, в среднем эта сумма составит 247 рублей.
2. Подорожают услуги почты. Подорожание распространится не только на пересылку писем, но на заказные бандероли и те, на которые будет установлена ценность.
3. Ужесточится контроль за опасными грузами. Теперь каждая машина, осуществляющая такие перевозки, должна будет оснащена навигатором ГЛОНАСС.
4. Оценки качества работы медицинских заведений. Каждый желающий сможет оставить свое мнение через Единый портал государственных, а также муниципальных услуг.
5. «Закон перекрестка». На дорогах будет произведена специальная разметка, обозначающая границы перекрестка.
6. Услуги ЖКХ без посредников. Потребители жилищно-коммунальных услуг могут заключать прямые договоры с ресурсоснабжающими организациями, минуя управляющие компании. ■

В РОСТРУДЕ РАССКАЗАЛИ, СКОЛЬКО ПРАЗДНИЧНЫХ ДНЕЙ ОЖИДАЮТ РОССИЯН В СЛЕДУЮЩИЕ ДВА МЕСЯЦА. Первая рабочая неделя мая продлится два дня. В связи с празднованием Дня России в июне россиян ждут три выходных. ■

● ДОРОГА К ХРАМУ

Бог положит на душу

Организован сбор пожертвований во всех приходах Чебоксарско-Чувашской епархии для поздравления заключенных с Пасхой. Акция проводится по благословению Главы Чувашской митрополии, митрополита Чебоксарского и Чувашского Варнавы Епархиальным отделом по тюремному служению.

Каждый желающий может пожертвовать ту сумму денег, которая будет не обременительна – сколько «Бог положит на душу».

Как сообщается на сайте Чувашской митрополии, на собранные по всем церквям Чувашской епархии средства будут куплены и покрашены к Пасхе яйца и куличи, иконки. Затем их распределят по всем колониям на территории нашей епархии, чтобы священники могли лично поздравить каждого лишенного свободы с Воскресением Христовым. ■

● ЭТО ИНТЕРЕСНО

Лучше всех

Пятилетний мальчик из г. Чебоксары Лев Гренадерский удивил ведущего шоу «Лучше всех» Максима Галкина своими познаниями в области географии.

Премьера эфира с его участием состоялась на Первом канале в минувшее воскресенье, 1 апреля. Мальчик рассказал ведущему, какие моря омывают Россию, Южную Америку и Азию и ответил на множество других вопросов. Также юный географ назвал страны и их столицы, которые видел на огромном крутящемся глобусе.

На вопрос о том, кем мальчик хочет стать в будущем, Лев ответил, что станет дипломатом. За участие в программе ведущий наградил его медалью и подарил рюкзак со сладостями. ■

ГОСУСЛУГИ в режиме реального времени



● ИЗ ПЕРВЫХ УСТ

Из года в год Единый портал государственных услуг становится все популярней среди жителей нашей республики. Он освобождает от утомительной беготни по разным кабинетам, ожидания своей очереди. Госуслуги можно получить быстро и просто, не выходя из дома. Об их самых востребованных видах, изменениях и новшествах рассказал министр информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики Александр ИВАНОВ.

– Александр Степанович, Президент России Владимир Путин в своем Послании Федеральному Собранию поставил такую задачу: «В течение шести лет обеспечить предоставление практически всех госуслуг в режиме реального времени». Чувашия сможет выполнить эту задачу?

– Наш регион сделает все возможное для выполнения поручения главы государства. Задача непростая, но осуществимая. Большинство востребованных услуг уже сейчас можно получать онлайн, не выходя из дома. Взаимодействие налажено в самых разных сферах жизни человека: ЖКХ, образование, здравоохранение, транспорт, социальная сфера и др. Конечно, перечень доступных услуг и сервисов будет расширяться.

Не менее важное направление – интеграция региональных информационных порталов с ЕПГУ. Зарегистрировавшись один раз, гражданин может получать услуги на самых разных государственных сайтах.

– Сколько человек зарегистрировано на портале? Какая возрастная категория наиболее активна?

– По данным Минкомсвязи России, на ЕПГУ зарегистрировано 68 млн граждан страны. Учетную запись на сайте «Госуслуги» имеет больше половины населения Чувашии в возрасте от 14 лет и старше (56,3%). Чаще всего к возможностям портала прибегают молодежь и люди среднего возраста.

– С 1 февраля 2018 года изменился порядок электронной записи к врачу. Пользуется ли эта услуга популярностью, как и в прошлом году?

– Для электронной записи к врачу стала обязательной регистрация на ЕПГУ. Нововведения призваны облегчить работу для граждан с личным кабинетом на портале, не нужно запоминать дополнительные логины и пароли для доступа ко всем электронным государственным услугам. Для записи на прием к врачу нет необходимости проходить полную регистрацию, достаточно ввести данные своего паспорта и СНИЛС. Взрослый может записать от себя ребенка, указав его данные СНИЛС. Также сохраняется возможность записи к врачу традиционными способами: через регистратуру или call-центр.

– Еще какие услуги наиболее востребованы в нашей республике?

– Органами власти Чувашии в электронной форме оказывается порядка 60 государственных и муниципальных услуг. В 2017 году жители республики направили порядка 168 тысяч заявок. Обращаемость к порталу выросла в 3 раза. Среди региональных услуг наибольшей популярностью пользуются запись на прием к врачу, сервисы органов ЗАГС, запись в детский сад, выдача архивных справок, среди федеральных – получение информации о состоянии лицевого счета в ПФР, регистрация автомобилей, получение водительских удостоверений и регистрация по месту жительства или прописки.

– С этого года можно получить разрешение на строительство в электронном виде. Расскажите об этом поподробнее.

– С 2018 года получить разрешение на строительство или ввод объекта в эксплуатацию, заказать градостроительные планы стало еще проще. Услуги в электронном виде теперь оказывают все администрации городов и сельских поселений. Ранее сервис был доступен только в Чебоксарах. Заявка подается через ЕПГУ. Здесь необходимо заполнить специальную форму и прикрепить нужные документы. Запрос напрямую поступит в орган власти, а результат поступит в личный кабинет пользователя.

– Еще какие новшества ожидают пользователей портала в этом году?

– В 2018 году продолжат действовать важные нововведения прошлого года. Воспользовавшись госуслугами, обратившиеся могут сэкономить не только время, но и деньги – по ряду услуг можно получить скидку на оплату госпошлины.

В разделе «Мое здоровье» появятся новые услуги для граждан, например, актуальная информация о прикреплении к медицинской организации и выбранной страховой компании, возможность оформления заявления о прикреплении к медорганизации и получения информации из своей электронной медицинской карты.

– Спасибо за интервью.

БЕСЕДОВАЛА ЯНА МАЙСКАЯ

СПРАВОЧНО

Чувашская Республика вошла в число получателей субсидии из федерального бюджета в объеме 12,5 млн рублей на поддержку региональных проектов в сфере информационных технологий в 2018 году. Средства пойдут на перевод новых госуслуг в электронный вид, модернизацию регионального контента на ЕПГУ.

ГЛАС НАРОДА

Вы пользуетесь электронными госуслугами?

Владислав КУТЯЛКИН,
д. Крикакасы:

– Раньше для подачи документов на регистрацию автомобиля либо записи на получение водительского удостоверения приходилось стоять в очереди 2-3 часа. Теперь использование ЕГПУ ускоряет процедуру. Кроме этого на портале оплачиваю штрафы ГИБДД.

Елена КРАСНОВА,
п. Кугеси:

– Я с удовольствием пользуюсь электронными услугами. Это очень удобно. Один раз зарегистрировалась и получаю государственные услуги не выходя из дома. Портал работает круглосуточно, без выходных, праздников и везде, где доступен Интернет. Одни меняют паспорт, другие записывают ребенка в детский сад, на прием к врачу – тоже через портал.



Геннадий ПЕТРОВ,
д. М. Янгильдино:

– До недавнего времени я ими не пользовался. Причина в том, что я с недоверием относился к тому, что мои персональные данные будут витать где-то в Интернете, кто-то посторонний может получить к ним доступ и воспользоваться ими в преступных целях. Однако я напрасно переживал – вся информация надежно защищена порталом.

Брать количеством

● ПРОИЗОШЛО В РАЙОНЕ

С начало года в Чебоксарском районе зарегистрировано 11 преступлений в быту, за аналогичный период прошлого года – 16. Снижение произошло за счет нововведений в законодательстве. Теперь на дебошира составляется административный протокол, и виновное лицо привлекается к ответственности. При этом минимальный штраф составляет 5 тысяч рублей. Также его могут арестовать или назначить обязательные работы.

Александрпа Андрей çĕршывăн тĕп хулин «Диалог 902-мĕш шкулĕнче» вĕренеççĕ. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тесе ахаль каламан. Пĕр тăван Костинсем яланах çĕннин шыравĕнче, çĕннине курма тата кăтартма ăнтăлнă пекех, вĕсен кĕçĕн мăнукĕсем те пурнăçра хастар. «Александрăн професси суйласа илме вăхăт çитрĕ», – тет амăшĕ. Ятарлă 10-мĕш медицина класĕн вĕренекенĕ тĕп предметсене химипе биологие тĕплĕ шĕкĕлченипе, акăлчан чĕлхисĕр пуçне нимĕçле вĕреннипе пĕрлех футбол, гитара валли те вăхăт тупать. Ку шкулта медицина учрежденийĕсене вуннăмĕш класранах практикăна илсе çӳреççĕ, эрнекунсене вара медицина колледжĕнче ирттереççĕ. Хăй каланă тăрăх, çакă Александршăн калама çук кăсăклă. «Вуласа вĕренни – пĕрре, курни вара пачах урăхла пĕлӳ парать», – тет вăл. Мăн аслашшĕ евĕрех, пултарулăх çынни, ӳнер илемне туйма пĕлет: Мускаври «Маска» театр студине çӳренĕ. Вун тăваттăри Андрейăн чун киленĕçĕ – кикбоксинг. Вăл та пиччĕшĕпе пĕрле çине тăрсах нимĕç чĕлхине вĕренет. «Икĕ чĕлхе – икĕ ăс», – тет яланах вĕсен асламăшĕ – Николай Костинăн хĕрĕ Маргарита Николаевна. Вăл та Мускавра пурăнать.

Тĕл пулура Ольга Викторовна та хăйĕн валли çĕннине темĕн чухлех тупрĕ. Хальччен вăл аслашшĕ çарти ахаль фотокорреспондент пулнă тесе шухăшланă. Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă – кăна мăнукĕ лайăх пĕлет. Çар тивĕçне татнă хыççăн ăна Хусанти Офицерсен çуртне ĕçлеме чĕнни пирки вара Чăваш Енри ĕçтешĕсенчен хĕрарăм пуçласа илтрĕ. Унăн аслашшĕ çар пурнăçĕпе çав тери сывăх пулнă, çавăнпах ăна халлланă репортажсене хатĕрлеме шаннă. Ку опыт вара ахаль килмен. РФ Оборона министерствин сайтĕнчи награда хутĕнчен Николай Костина «Мускава хӳтĕленĕшĕн» медальпе чыслани паллă. II Тĕнче вăрçи вăхăтĕнче вăл Тăван çĕршыва Мускав сывăхĕнче вырнаçнă бомбардирсен 40-мĕш авиаци полкĕнче хӳтĕленĕ. Ку полк 1942 çулхи сентябрьччен Мускавшăн тăнă. Çакăн хыççăн Тĕп командованин Аслă ставкин разведкăллă авиацин виçĕ полкĕнчен пĕрин йышне кĕрет. Николай кунта аэрофотоĕçпе разведка уйрăмĕн фотолаборантĕнче службăна пурнăçлать. Сталинград çапăçăвне хатĕрленнĕ хушăра ку полк оборона позицийĕсене ӳкерме хутшăннă. Çĕршыв çарĕн Аслă ертӳçи валли районăн пĕрлехи фотокартине хатĕрлес ĕçе мăн аслашшĕ те хутшăннине пĕлни мăнукĕсенче, паллах, мăнаçлăх туйăмне çуратрĕ. Вăрçă хыççăн, 1948 çулта, унăн полкĕ Грецире иртнĕ разведка операцийĕсене те хутшăнать. Сăн ӳкерме авиаци штурманĕсем вĕçнĕ. Вĕсене вара çĕр çинче фотолаборантсем, çав йышра Николай Костин та, кĕтсе илнĕ.

Кăсăклă кинофильм пекех вĕсен пурнăçĕ. Кураврисăн ӳкерчĕксем вара – унти кадрсем тейĕн. Историе вĕсен урлă вĕренсе ăша хывни çамрăксемшĕн чĕрĕ уроксем пекех пулĕç. Курмалли, тĕпчемелли вара вĕсен нумай. Костинсен Чăваш Енри ĕçтешĕсем вĕсене мăн аслашшĕн архивĕнчи Аслă революцичченхи сăн ӳкерчĕкĕсен дискне парса ячĕç. «Тăван Ен» хаçат редакцийĕнче хăнасене тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Виктория Вышинская Костинсене халлласа пуçарнă I Республика премийĕ пирки каласа кăтартрĕ, унта йышăннă ĕçсен куравĕпе паллаштарчĕ. Мăн аслашшĕн ас тăвăмне Чăваш Енре мĕн тери упранипе тĕлĕннине пытармарĕç вĕсем. Çакăншăн чĕререн тав турĕç. «Йăх-несĕл сыхăнăвĕ мĕн тери пĕлтерĕшлине ăнланмашкăн пире Шупашкара килсе курма пӳрчĕ. Эсир калама çук пысăк ĕç туса ирттернĕ», – терĕ фотожурналистсемпе журналистсене тав туса Ольга Викторовна. Çĕкленӳллĕ туйăм вĕсене пĕр вырăнта тăма памасть халĕ. Костинсем ытти тăванĕпе те çыхăнăва çирĕплетме çак кунсенчех Ригăна вĕçеççĕ. Кунта Николай Костинăн йăмăкĕсем Нинăпа Зоя пурăннă.

ТАТЬЯНА МАЙОРОВА

● САМАХ МАЙ

Чăвашсен пĕрремĕш фотографĕсем, Ишекре çуралнă пĕр тăван Костинсем çинчен çырнă очеркпа «Тăван Ен» хаçатăн 2017 çулхи август уйăхĕнчи 31-32 номерсенче паллашма пулать.

Сăн ӳкерчĕксене пăхса тĕлĕнĕр: https://vk.com/tavanen.

▶ ПĔР УЙĂХРАХ, ПАЛЛАХ, ПУР КОРРУПЦИОНЕРА ТА ПĔР "ХУРА" СПИСОКА ПУХМА МАЙ ÇУК–ТĂР, ВĔСЕМ ВАРА САХАЛАХ МАР.

Çулăмпа вылять тӳре-шара

● КОРРУПЦИ

Раççей Президенчĕ Владимир Путин коррупцири преступленисемшĕн отставкăна янă чиновниксен реестрне туса хурасси пирки калакан закона алă пуснăранпа кĕçех çулталăк çитет. Документа Патшалăх службипе управлени кадрĕсен «Патшалăх служби» федераци порталĕнче кăçалхи январьтен пичетлесе тăма хушнă.

Коррупципе çыхăннă преступленисем юлашки çулсенче Шупашкар районĕнчи тӳре-шара пирки те каластарчĕç те – унта кĕçех вĕсен хушамачĕсем те курăнĕç-ши? Хальхи вăхăтра вара реестр Раççей Федерацийĕн Правительствин йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн йĕркеленет кăна-ха – портал çинче çакăн пек пĕлтереççĕ. Дмитрий Медведев премьер-министр реестр положенийĕ çинчен постановление 2018 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче алă пуснă. Пĕр уйăхрах, паллах, пур коррупционера та пĕр «хура» списока пухма май çук-тăр, вĕсем вара сахалах мар. Шупашкар районĕнче кăна-ха акă пĕлтĕр коррупцири преступленисен шучĕ икĕ хут тенĕ пек ӳснĕ. 2016 çулта 15 преступление шута илнĕ тĕк, 2017 çул вĕçленнĕ тĕле вĕсем 29 çитнĕ. Тӳре-шара закона хирĕçле ĕçĕсемпе иртнĕ çул 5,5 млн тенкĕлĕх сăтăр кӳнĕ. Çакăнтан паянхи кун тĕлне 2,2 млн тенке кăна бюджета тавăрма май килнĕ. Ытти сăтăра саплаштарма 14 çĕр лаптăкне арестленĕ. Район пуçлăхĕ Николай Хорасев ертсе пынипе райадминистрацире иртнĕ коррупцие хирĕç канаш ларăвĕнче çакăн пирки Шупашкар район прокурорĕн аслă пулăшуçи Петр Анисимов пĕлтерчĕ. Коррупцие хирĕçле закона пăснă тĕслĕхсене районта ытларах çĕр хутшăнăвĕсемпе çыхăннă ĕçсенче тупса палăртаççĕ. «Ял тăрăх пуçлăхĕсем çурт-йĕр çавăрма е урăх тĕллевпе усă курма лаптăк уйăрса парасси пирки постановленирен çырса илнисене закона пăхăнмасăр, пĕлĕшĕпе е юлташĕпе туслă хутшăнусене мала хурса хатĕрлеççĕ», – усăмлатрĕ Петр Валерьевич. Анчах яваплăх пирки прокуратура ун йышшисене пуçлăх пуканне пушатсан та аса илтерет. Кăшавăш тата Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕсенче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен экс-пуçлăхĕсем патшалăха шăпах çак схемăпа улталама тăнă. Постановленисен суя выпискисем тăрăх çĕр лаптăкĕсене харпăрлăха регистрациленĕ тĕслĕхсемпе 2017 çулта 4 уголовнăй ĕç пуçарнă.

2017 çулта Шупашкар районĕнче коррупци тĕлĕшĕнче йĕркене пăснă 210 тĕслĕхе шута илнĕ. 2016 çулта вĕсем 159 пулнă. Район прокуратури пĕлтĕр вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем закона пăсса кăларнă 71 нормăпа право актне хирĕçленĕ, 2016 çулта – 18. 15 тавăçа суда çитернĕ, ку кăтарту 2016 çулхипе танлаштарсан 5 хут ӳснине палăртмалла. Закона пăснине пĕтерме хушса 34 представлени тăратнă (2016 çулта – 8), вĕсем тăрăх должноçри 34 çынна явап тыттарнă (2016 çулта – 11). Прокурор постановленийĕпе должноçри 4 çынна административлă йĕркепе явап тыттарнă, пĕлтĕр административлă кодекспа килĕшӳллĕн саккăрăн айăпланнă. Тĕрĕслевсем хыççăн прокуратура ĕçченĕсем 2016 çулта 3 уголовнăй ĕç пуçарнă пулнă, пĕлтĕр 4.

Пĕлтĕр администрацин контрольпе шутлав органĕ Шемшер, Çĕньял-Покровски ял тăрăхĕсем, район администрацийĕ бюджет тĕлĕшĕнчи яваплăха мĕнле пурнăçланине хак панă. Бюджет укçи-тенкине тĕллевсĕр усă курнă тĕслĕхсене районта 2017 çулта тупса палăртман. Çакăн пирки ларура администрацин контрольпе шутлав органĕн председателĕ Надежда Ведина пĕлтерчĕ.

ВИКТОРИЯ ВЫШИНСКАЯ

Алла ил хăвна

● ÇЫН ТАТА САККУН

Çын пурнăçĕнчен тата сывлăхĕнчен хакли нимĕн те çук. Район территорийĕнче çынна вĕлернĕ тĕслĕхсен шучĕ ӳснине кура прокуратура чи малтан чан çапма пуçларĕ. Пĕлтĕр виçĕм çулхипе танлаштарсан çакăн пек тискер преступленисене иккĕ ытларах регистрациленĕ.

Никам та айăплавран хăтăлайман, суд умне пурне те тăратнă. Çакăн пек уйрăмах йывăр преступленисем эрех-сăра ĕçнĕ хыççăн пулаççĕ – ăнлантараççĕ Шупашкар район прокуратуринче. Çакна судпа следстви практики те çирĕплетет. Районта пулса иртнĕ çынна вĕлернипе çыхăннă преступленисенче айăпли те, ун аллинчен шар куракан те ӳсĕр пулни паллă. «Эрех шуйттанпа пĕр тăван», – тет халăх каларăшĕ. Пĕрле черкке хыççăн черкке пушатакансен хушшинче тахăш самантра хура кушак чупса иртет. Хирĕçӳ преступлени патне илсе çитерет. Чылай тĕслĕхре шар куракансем – преступникĕн тăванĕсем, пĕлĕшĕсем, кӳршĕсем. Тепĕр чух инкек тӳсекен ĕçнĕ хыççăн хĕрсе тавлашма хĕтĕртнине палăртаççĕ район прокуратуринче.

Акă иртнĕ çулхи август уйăхĕнче Ишекре пурăнакан Александр Петров (ятне улăштарнă) патне унăн тахçанхи юлташĕ килнĕ, тĕл пулу сăлтавĕпе эрех-сăра ĕçме сĕннĕ. Кил хуçи ывăннине пĕлтерсе хайхине тухса кайма ыйтнă. Хăнана ку килĕшмен, çакна хирĕç сĕтел хушшине меллĕ вырнаçса ларнă, хăйĕнпе ĕçме хистенĕ. Кил хуçи чĕнмен хăнана хăваланă. Арçынсем çапăçма пуçланă. Тĕл пулу кил хуçи арçынна çĕçĕпе чикнипе вĕçленнĕ. Суранланнă арçын вырăнтах вилсе кайнă. Суд Петрова 8 çул та 6 уйăхлăха ирĕкрен хăтарса çирĕп режимлă колонире юсанма йышăну кăларнă.

Мартăн 15-мĕшĕнче кăна-ха Шупашкар район сучĕ Çырмапуçĕнче пурăнакан тепĕр арçынна та 10 çул та 6 уйăхлăха тĕрмене хупма йышăнчĕ. Пĕлтĕр, Çĕнĕ çул умĕн пĕлĕшĕ патне кайса эрех-сăра ĕçме пуçланă хайхи. Кил хуçи сăмахĕсем килĕшмен, тавлашма пуçланă. Тытăççах ӳкнĕ. Тахăш самантра хăна сĕтел çинче выртакан çĕççе ярса илнĕ, унпа кил хуçине чикнĕ. Лешĕ сурансене пула вилсе кайнă.

Следстви тата суд палăртнă тăрăх, айăпланнă çын ниçта та ĕçлемен, хутран-ситрен ĕçлесе илнипе пурăннă, эрех-сăрапа иртĕхнĕ. «Ас тумастăп, питĕ ӳсĕр пулнă», – хуравланă вăл следователь çав кун пулса иртнине тĕплĕнрех аса илме ыйтсан. Суд приговора вуланă чухне çакна, ӳсĕр пулнине, айăплава вăйлатакан сăлтав вырăнне шута илнĕ.

Çынна пĕлсе тăрсах вĕлернĕшĕн уголовлă саккунра пăхса хунă яваплăх çирĕп. Анчах чунтан ӳкĕнни те, йĕплĕ хӳме леш енне нумай çуллăха лартни те çын пурнăçне каялла тавăраймĕ. Çавăнпа çакăн пек преступленисене пӳлес тесе йĕрке хуралĕн, патшалăхри влаç тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тачă çыхăнса ĕçлени пĕлтерĕшлĕ, анчах та çакăн пек тискер преступленисене пӳлес тĕлĕшĕнче тата вĕсем пулма пултарасси çинчен пĕлтерме халăх хастар хутшăнни те кирлĕ.

Çемьере çынна пусмăрланине, граждансем хăйсене чарусăр тытнине курсан шарламасăр çӳремелле мар, çакăн çинчен çийĕнчех компетентлă органсене пĕлтермелле. Çывăх çынсемпе тимлĕ пулма, кирек хăш лару-тăрура та хамăра алла илме вĕренмелле.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

УСАЛ ХЫПАР

Районта эрех-сăра ĕçсе наркăмăшланса вилекенсен шучĕ пысăк. Райадминистрацире тунтикунсерен иртекен планеркăра РФ ШĔМĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕ Евгений Крылов çак çивĕч ыйтăва хускатрĕ. Иртнĕ эрнере кăна-ха акă 47 тата 62 çулсенчи икĕ арçын вилнĕ.

Çакă килте юхтарнă эрехе реализацилекен, спирт хутăштарса сутакансем çаплипех пуррине кăтарса парать. Акă мартăн 30-мĕшĕнче Çĕнъял ял тăрăхĕнчи пĕр арçынна спиртлă шĕвексене сутнă чухне алăранах ярса тытнă. Хайхи пĕр литр аншарлие 200 тенкĕпе сĕннĕ. Çичĕ çул каялла пĕрре суд сакки çинче ларнă-ха вăл. Ун чухне ăна РФ УК 238-мĕш статйипе 1-мĕш пайĕпе (хăрушсăрлăх йĕрки ыйтнине тивĕçтермен тавара е продукцие туса кăларни, упрани, турттарни, çакна шута илмесĕр ĕçсем пурнăçлани тата пулăшу пани) айăпланă пулнă. Хальхинче те яваплăхран пăрăнаймĕ. 80 çулти ватă алăран пурттине ямасăр полици лейтенантне вĕлерессипе хăратнă. Йĕркене пăсакан тĕлĕшĕпе РФ УК 238-мĕш статйипе ĕç пуçарнă – пĕлтереççĕ Шупашкар район прокуратуринчен.

Телепрограмма Матч ТВ

ПОНЕДЕЛЬНИК

6.30 Д «Заклятые соперники» 12+
7.00, 8.30, 11.05, 13.40, 15.35, 19.25 Новости
7.05, 11.10, 15.40, 23.25 Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
8.35 ФОРМУЛА-**1.** Гран-при Бахрейна
11.40 Футбол. Чемпионат Англии. «Эвертон» - «Ливерпуль»
13.45 Футбол. Чемпионат Испании. «Реал» (Мадрид) - «Атлетико»
16.05 «Россия - Германия. Live» **12+**
16.25 Континентальный вечер
16.55 Хоккей. КХЛ. Финал конференции «Восток» «Трактор» (Челябинск) - «Ак Барс» (Казань). Прямая трансляция
19.35 «Мундиаль. Наши соперники. Уругвай» **12+**
19.55 Тотальный футбол
21.25 Футбол. Чемпионат Германии. «Лейпциг» - «Байер» Прямая трансляция
0.05 «**САМОВОЛКА**» 16+

ВТОРНИК

6.30 Д «Заклятые соперники» 12+
7.00, 8.55, 12.30, 15.35, 17.30, 17.55 Новости
7.05, 12.35, 15.40, 18.00, 23.40 Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
9.00 РОСГОССТРАХ Чемпионат России по футболу
11.00 Тотальный футбол **12+**
13.05 Футбол. Чемпионат Англии. «Челси» - «Вест Хэм»
15.05 Футбольное столетие **12+**
15.55 Хоккей. Всероссийские финальные соревнования юных хоккеистов «Золотая шайба» имени А.В. Тарасова. Финал. Прямая трансляция из Дмитрова
17.35 «Мундиаль. Наши соперники. Уругвай» **12+**
18.30 Смешанные единоборства. Bellator. Б. Хендерсон против Р. Уэрты. Д. Кейлхольтц против Л. Овчинниковой. Трансляция из Венгрии **16+**
20.30 Журнал Лиги чемпионов **12+**
21.00 Все на футбол!
21.35 Футбол. Лига чемпионов. **1/4** финала. «Манчестер Сити» - «Ливерпуль» Прямая трансляция
0.15 Баскетбол. Кубок Европы. Финал. «Локомотив-Кубань» - «Дарюшшафака»

СРЕДА

6.30 Д «Заклятые соперники» 12+
7.00, 8.55, 11.30, 14.35, 17.25, 19.50 Новости
7.05, 11.35, 14.45, 20.00, 23.40 Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
9.00, 6.00 «Высшая лига» **12+**
9.30 Футбол. Лига чемпионов. **1/4** финала. «Манчестер Сити» - «Ливерпуль»
12.05 Футбол. Лига чемпионов. **1/4** финала. «Рома» - «Барселона»
14.05 «Россия футбольная» **12+**
15.25 Волейбол. Лига чемпионов. Мужчины. Плей-офф. «Локомотив» - «Перуджа» Прямая трансляция
17.30 «Гид по Дании» **12+**
17.50 Профессиональный бокс. Э. Джошуа против Д. Паркера. Бой за титулы чемпиона мира по версиям WBA, IBF и WBO в супертяжёлом весе. А. Поветкин против Д. Прайса. Трансляция из Великобритании **16+**
20.40 Журнал Лиги чемпионов **12+**
21.00 Все на футбол!
21.35 Футбол. Лига чемпионов. **1/4** финала. «Реал» (Мадрид, Испания) - «Ювентус» Прямая трансляция
0.10 «**РАДИ ЛЮБВИ К ИГРЕ**» 12+

ЧЕТВЕРГ

6.30 Д «Заклятые соперники» 12+
7.00, 8.55, 11.30, 14.35, 17.10, 19.55 Новости
7.05, 11.35, 14.40, 20.00, 0.25 Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
9.00 Футбольное столетие **12+**
9.30 Футбол. Лига чемпионов. **1/4** финала. «Реал» (Мадрид, Испания) - «Ювентус»
12.05 Футбол. Лига чемпионов. **1/4** финала. «Бавария» - «Севилья»
14.05 «Арсенал» по-русски» **12+**
15.10 Смешанные единоборства. UFC. Х. Нурмагомедов против М. Холлоуэя. Р. Намаюнас против Й. Енджейчик **16+**
17.15 Футбол. Лига чемпионов - **2009** г. /**10. 1/8** финала. «Севилья» - ЦСКА
19.25 «Наши победы» **12+**
20.55 «Арсенал» - ЦСКА. До матча» **12+**
21.15 Футбол. Лига Европы. **1/4** финала. ЦСКА - «Арсенал» Прямая трансляция
1.05 «**КОРОЛЬ БОЙЦОВ**» 16+

ПЯТНИЦА

6.30 Д «Заклятые соперники» 12+
7.00, 10.50, 12.55, 14.20, 16.55, 19.20, 23.05 Новости
7.05, 14.25, 19.25, 23.10 Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
8.50, 10.55, 14.55, 17.00 Футбол. Лига Европы. **1/4** финала
13.00 Футбол. Лига чемпионов. Жеребьевка **1/2** финала. Прямая трансляция из Швейцарии
13.20 Все на футбол!
14.00 Футбол. Лига Европы. Жеребьевка **1/2** финала. Прямая трансляция из Швейцарии
19.00 «ЦСКА - «Арсенал» Live» **12+**
20.10 Баскетбол. Кубок Европы. Финал. «Дарюшшафака» - «Локомотив-Кубань» Прямая трансляция
22.05 Все на футбол! Афиша **12+**
23.45 «День Икс» **16+**
0.15 «**ПЯТИБОРЕЦ**» 16+

СУББОТА

6.30 Д «Заклятые соперники» 12+
7.00 Все на Матч! События недели **12+**
7.20 «**ПАРЕНЬ ИЗ КАЛЬЦИЯ**» 16+
8.55 ФОРМУЛА-**1.** Гран-при Китая. Квалификация. Прямая трансляция
10.00, 12.30, 13.35, 21.25 Новости
10.05 Все на футбол! Афиша **12+**
11.05 «ЦСКА - «Арсенал» Live» **12+**
11.25 Автоспорт. Российская серия кольцевых гонок. «Крепость Грозная» Туринг. Прямая трансляция
12.35 Футбольное столетие **12+**
13.40, 16.25, 23.40 Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
14.25 Футбол. Чемпионат Англии. «Саутгемптон» - «Челси» Прямая трансляция
16.55 Хоккей. КХЛ. Кубок Гагарина. Прямая трансляция
19.25 Футбол. Чемпионат Англии. «Ливерпуль» - «Борнмут» Прямая трансляция
21.35 Футбол. Чемпионат Англии. «Тоттенхэм» - «Манчестер Сити» Прямая трансляция
0.15 Гандбол. Лига чемпионов. Женщины. **1/4** финала. «Ростов-Дон» - «Ференцварош» (Венгрия)

ВОСКРЕСЕНЬЕ

6.30 Все на Матч! События недели **12+**
7.10 Футбол. Чемпионат Испании. «Барселона» - «Валенсия»
9.00 ФОРМУЛА-**1.** Гран-при Китая. Прямая трансляция
11.15, 13.00 Новости
11.25 Автоспорт. Российская серия кольцевых гонок. «Крепость Грозная» Туринг. Прямая трансляция
12.30 «Автоинспекция» **12+**
13.10 «Вэлкам ту Раша» **12+**
13.40 РОСГОССТРАХ Чемпионат России по футболу. «Урал» (Екатеринбург) - «Спартак» (Москва). Прямая трансляция
16.05, 23.40 Все на Матч! Прямой эфир. Аналитика. Интервью. Эксперты
16.25 РОСГОССТРАХ Чемпионат России по футболу. «Уфа» - ЦСКА. Прямая трансляция
18.25, 20.55 После футбола с Георгием Черданцевым
18.55 Футбол. Чемпионат Италии. «Ювентус» - «Сампдория» Прямая трансляция
21.40 Футбол. Чемпионат Италии. «Лацио» - «Рома» Прямая трансляция
0.20 Х/ф «ПАРЕНЬ ИЗ КАЛЬЦИЯ» **16+**
2.00 Футбол. Чемпионат Франции. ПСЖ - «Монако»

Информационное сообщение

о приеме предложений по кандидатурам в составы участковых избирательных комиссий

Чебоксарская районная территориальная избирательная комиссия Чувашской Республики объявляет прием предложений по кандидатурам в составы участковых избирательных комиссий на территории Чебоксарского района Чувашской Республики. В соответствии с требованиями Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» участковые избирательные комиссии формируются на основе предложений политических партий, иных общественных объединений, представительных органов муниципальных образований, собраний избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы.

Прием документов осуществляется Чебоксарской районной территориальной избирательной комиссией в период с 16 апреля по 18 мая 2018 года по рабочим дням с 14-00 до 16-00 часов по адресу: Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15.

СУТАТПĂР
ПРОДАЕМ

02-60. Пластиковые ОКНА от 2400 руб за деревенское окно, утепленное в три стекла. Весенние суперцены. Скидки до 50%. Заводское качество. Тел.: 8-927-668-69-55.

09-37. Сено с доставкой. Тел.: 8-917-652-96-14.

04-10. Солома. Доставка. Тел.: 8-927-854-41-17.

02-61. Куры-молодки. Разные. Доставка. Тел.: 8-905-029-90-50.

03-59. Чупнă хĕрлĕ-шурă тына. Тел.: 8-903-379-44-37.

04-02. Сено. Тел.: 8-917-671-28-23.

04-03. Семена картофель ранний, сорт Импала, Ред Скарлет. Тел.: 8-919-673-27-37.

10-57. Коров, телок, бычков (молодняк). Доставка. Тел.: 8-987-126-30-07.

02-24. Сено в тюках. Тел.: 8-960-308-89-38.

03-72. Дом надворными постройками Чебоксарском районе. Тел.: 8-906-133-41-30, 8-927-843-79-65.

ТУЯНАТПĂР
КУПИМ

04-06. КРС, свиней, лошадей. Тел. 8-902-327-56-06.

05-14. Куплю КРС. Дорого. Тел.: 8-905-197-61-66.

04-08. Старые подушки, перины. Пух гусиный и утиный. Тел.: 8-999-609-50-32.

Приглашение! 26 мая 2018 г. в 10-00 ч.
МБОУ «Ишакская СОШ» приглашает своих выпускников 1968 года на вечер встречи. Оргкомитет. 8-927-990-91-00. 03-31

УТЕПЛЕНИЕ эковатой, пеноизолом, пенополиуретаном. **Акция –** ПРИ ЗАКАЗЕ УТЕПЛЕНИЯ – обследование тепловизором БЕСПЛАТНО. **Тел.: 8-952-026-98-48.** 02-62

ПРОДАЮ ячмень, пшеницу, мелкий и семенной картофель. Доставка. ☎ 8-961-338-21-08. 03-53

СервисЦ **Триколор** ТЕЛЕКАРТА МТС УСЛУГИ ОБМЕН Тел.: 8-927-990-46-75 07-38

03-42. Вăкăрсем, ĕнесем, пăрусем тата чирленĕ выльăхсем. Тел.: 8-919-974-46-14.

ПУЛĂШУ
УСЛУГИ

03-51. Чистка колодцев. Тел.: 8-927-847-37-25.

ÇĔР
ЗЕМЕЛЬНЫЕ ОТНОШЕНИЯ

03-64. Кадастровым инженером ООО «ЦКУ», Баскиным Дмитрием Станиславовичем, квалификационный аттестат № 21-13-8 почтовый адрес: г. Чебоксары, ул. Ленинградская, д. 36, офис 603, контактный телефон: 8-927-856-75-14 в отношении земельного участка с кадастровым № 21:21:231601:230, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, ст. Нива, уч. 230, выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границы земельного участка. Заказчиком кадастровых работ является Елагин Владимир Иссакович, контактный телефон 8-906-381-99-41. Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ земельных участков, расположенных по адресу: 1. Уч. 222. 2. Уч. 229. 3. Уч. 233.

Состоится по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ленинградская, д. 36, офис 603, 04 мая 2018 г. в 10.00 часов.

Пластиковые окна. Двери. Натяжные потолки. Тел.: 8-917-064-00-61. 03-29

Банкротство граждан, ИП. Гражданские, семейные, земельные споры, представительство в судах. Недорого. Бесплатная консультация. ☎ 8-908-301-10-94. 03-37

Сдаем в аренду офисное помещение площадью 23,7 кв. м. на 6 этаже редакционно-издательского комплекса «Дом печати»: г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13. Охрана. Видеонаблюдение. Парковка. Здание телефонизировано, интернет – оптиковолоконные линии связи. Цена 176 руб/кв.м. НДС нет. Стоимость аренды не включает коммунальные платежи. Тел.: 67-15-51, 20-10-85 в раб. дни с 8-00 до 17-00.

Продаю

- **Плиты перекрытия 6х1.2 (6500 руб).**
- **Перемычки (500 руб).**
- **Бой кирпича (3 т.р. за КАМаз,) все б/у, ДОСТАВКА, (доски, стропилы, шифер б/у, бесплатно).**

☎ 8-927-850-49-99. 04-12

СервисЦ **РЕМОНТ** ХОЛОДИЛЬНИКОВ ТЕЛЕВИЗОРОВ Тел.: 8-927-990-46-75 07-37

ПАМЯТНИКИ от 2200 рублей
АО «Базальт» г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 7.
предлагает **ПАМЯТНИКИ, КРЕСТЫ ИЗ МРАМОРНОЙ КРОШКИ, ЧЕРНОГО ГРАНИТА, СЕРОГО И БЕЛОГО МРАМОРА.**
- Столики, скамейки, ограды, венки.
- СКИДКИ, РАССРОЧКА ПЛАТЕЖА. ГАРАНТИЯ.

ДОСТАВКА И УСТАНОВКА. БЕСПЛАТНОЕ ХРАНЕНИЕ.
☎8 (8352) 56-29-68. 04-01

ХУРЛАНАТПĂР
СОБОЛЕЗНУЕМ

Коллектив работников МБОУ «Большекатрасьская СОШ» глубоко и искренне скорбит в связи с невосполнимой утратой – смертью
Александра Васильевича АРТЕМЬЕВА,
учителя ОБЖ, выражает соболезнование родным и близким. 04-04

Выражаем глубокое соболезнование родным и близким в связи с преждевременным уходом бывшей учительницы немецкого языка
Ларисы Кирилловны ИВАНОВОЙ,
много лет проработавшей в МБОУ «Синьяльская СОШ». ***Коллеги и ученики.*** 04-09

Коллектив МБОУ «Синьяльская СОШ» скорбит и выражает соболезнование родным и близким в связи с кончиной ветерана педагогического труда, учителя немецкого языка
Ларисы Кирилловны ИВАНОВОЙ. 04-07

Рубрика «Соболезнование»
для юрлиц и ИП[1] – **700 руб,**
для частных лиц[2] – **400 руб.**

Кĕтмен парне

● ПУЛНИ-ИРТНИ

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ умĕн мăшăрăмпа çакăн пек калаçу пулса иртрĕ. Эпир 15 çул пĕрле пурăнатпăр пулин те ăна пĕрре те парне илсе паман.

– Мĕн илсе парас-ха сана уяв ячĕпе? – ыйтрăм унран.

Мăшăрăм тутине кăмăлсăррăн вылятса илсе:

– Мана кĕтмен парне кирлĕ, çав вăхăтрах вăл усăллă та пултăр, – терĕ.

Паллах, ĕмĕтленни паха, анчах тем кирлĕ-ха ăна, пĕлейместĕп. Тĕпелти çӳлĕк апат-çимĕçпе, чашăк-тирĕкпе тулли, çи-пуçĕ, шапки, кĕрĕкĕ пур, тата мĕн кирлĕ? Мăшăр куçĕсемпе ман çине шăтарас пек пăхрĕ те: «Юрĕ, ĕмĕтленни пулмасан та мана каçхине тăхăнса выртма çĕнĕ кĕпе кирлĕ», – терĕ.

– Илтрĕн-и, каçхине тăхăнса выртма вĕр-çĕнĕ кĕпе! Çĕнни, 48-мĕш размерли! Точка! – тăн кĕртрĕ вăл мана.

Ĕçĕ кунта акă мĕнре: эпĕ çи-пуç таврашне уйрăмах туянма юратмастăп, анчах мĕн тăвăн, ирĕксĕрех тухса утрăм суту-илӳ лавккине аялти çи-пуç уйрăмне. Акă эпĕ пысăк лавккана çитрĕм, хама кирлĕ уйрăма кĕтĕм. Куратăп: çамрăк сутуçă ман çине тимлĕн пăхать, эпĕ те мăйăхлă ватă ар ун çине куçа ывăтрăм.

– Мĕн кирлĕ сире, пиччĕ? – терĕ мана хайхи куçран тинкерсе.

–Йĕм, – терĕм те хам сăмахран вăтанса хĕрелсе кайрăм. Мĕн тери намăс пулса кайрĕ, çамрăксемпе калаçма та пĕлместĕп.

– Сире миçемĕш размер?

Эпĕ çухалса кайрăм, хам миçемĕш размер тăхăннине аса илеймерĕм.

– Сире хăвăра валли-и?

– Çапла, хама валли.

Вăл мана ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпи таранах сăнама пуçларĕ, пилĕк тĕлне çитсен чарăнчĕ. «Тур çырлах, мана шăлавар хывма хушмĕши», – тесе хăраса ӳкрĕм. Эпĕ аялтан тăхăнмалли çи-пуçа питĕ сайра хутра туянатăп, каçарăр та, пĕр 100 хут çусан, юрăхсăра тухсан кăна улăштаратăп çĕннипе. Ӳстермесĕр калатăп, эпĕ ытларах кивĕ япаласене килĕштеретĕп. Çаплах çамрăк сутуçă умĕнче асапланса тăратăп. Вăл ăнланчĕ, хăюлăх çитерсе ыйтать:

– Сире шывра ишмелли е боксик?

– Боксик – ку тата мĕнле япала-ши, боксерсем тăхăнаканни-ши? – ĕнсене кăрт-кăрт хыçатăп хайхи, ним каламасăр пусăрăнса тăратăп. Вăл кулать.

– Мĕн тĕсли килĕшет сире?

Ак тамаша! Мĕнле тĕс килĕшет мана: симĕсси, кăвакки, тĕксĕмми… Эпĕ çаплах анра сурăх пек тăратăп.

– Мана пур пĕрех, – хуравлатăп юлашкинчен.

– Пирĕн кунта эрнере кашни кун улăштарса тăхăнмалли çиччĕлли те пур.

Мана хăрушă пулса кайрĕ, ара, уйрăмри мĕн пур тавара мана сутасшăн пулас, кĕсьере ун чухлĕ укçа çуккине туйса пуçа пăркалатăп. Вăл сентре çинче шывра ишмелли тата «боксерсем тăхăнакан» йĕмсене илсе пакетпа чĕркесе тыттарчĕ, таваршăн укçа тӳлесе магазинтан тухса шăвăнтăм. Йĕмлĕ пулни çурма çитĕнӳ кăна-ха, чи хăрушши – мăшăрăм валли уяв ячĕпе саккас парне туянасси.

Хĕрарăм çи-пуçĕн уйрăмне кĕриччен хăюллăрах пулма 150 грамм çавăрса хутăм. Уйрăма кĕриччен шухăшлатăп: ара, каçхине тăхăнмалли кĕпене мăшăрăн хăйĕн илмелле, халĕ мана çакланчĕ. Мĕн тери асап, хам валли илесси мар кунта. Тепĕр алă грамм хушмаллаччĕ…

– Аван-и, сывлăхсем мĕнле? – терĕм кĕрсенех, анчах манăн сассăм тухмарĕ, чĕлхем çĕтрĕ. Виçĕ çамрăк сутуçа куç илмесĕр сăнатăп. Вăрăммипе пĕчĕкреххи вăр-вар ман пата чупса килчĕç. «Кхăм-м!» ӳсĕрсе илтĕм те сисмесĕрех «манăн арăм пур» тесе персе ятăм хăйхисен умĕнче. Каларăм та хамран хам хăраса кайрăм. Ăнлантăм, анчах каярах юлнă – çĕр грамм анчах ĕçмеллеччĕ тата çыртма та ăс çитермеллеччĕ.

– Саламлатăп, – тет вăрăмми.

– Эпĕ сирĕн пата каçхине çывăрнă чухне тăхăнса выртмалли, канлĕ тĕлĕксем курмалли çи-пуç патнеччĕ, – манăн пуç кашласа кайрĕ, урасем чĕтреме тытăнчĕç. Вĕсене те кунта кунĕпе тăма кичем пулас, кăмăллăн йăл кулса пуçĕсене ман енне ывăтрĕç. Çийĕнчех пĕчĕкки вăр-вар хускалчĕ:

– Сире савни валли пижама кирлĕ-и?

– Çук, пижама мар, вăл тата савни мар – арăм.

– Сире каçхи кĕпе кирлĕ пулас?

– Çапла, çавна туянасшăн.

Вĕсем пĕр-пĕрин çине пăхса кăмăллăн кулнипе шурă шăлĕсем çуталса илчĕç. Вĕсем мăшăр мĕнле размер, çи-пуç мĕнле материалтан пулмаллине ыйтса пĕлчĕç.

– Савнин кĕлеткине аса ил-ха: кăкăр, пилĕк, купарча, – теççĕ хайхисем.

– Савни мар, арăм, – юрать, юнашар пукан пур, лак лартăм анраса, арăмăн кĕлеткине аса илме куçа хупрăм. Тем вăхăт ларнă, виçĕ сутуçă хĕвĕшнине туйса куçа уçрăм. Умра ман юратнă мăшăрăм тăрать:

– Ан хумхан, – тет ачашласа пуçран, – кăлар укçуна, хамах туянатăп. Вăл хăйне валли виçеллĕ, кĕл чечек тĕслĕ, витĕр курăнакан каçхи кĕпе суйларĕ. Укçатенкĕпе татăлса суту-илӳ керменĕнчен уçă сывлăша тухрăмăр. Эпĕ тинех ирĕклĕн сывласа ятăм.

МИХАИЛ ИГНАТЬЕВ,
КИВÇУРТ МАРКА

● ГОСУСЛУГИ

Отдел социальной защиты населения Чебоксарского района сообщает, что для граждан, зарегистрированных на портале государственных услуг, появилась возможность подать заявление через личный кабинет на следующие меры социальной поддержки:

- ежемесячное пособие на ребенка,
- субсидии на оплату жилого помещения и коммунальных услуг,
- ежемесячную денежную компенсацию расходов на оплату жилого помещения и коммунальных услуг отдельным категориям граждан (инвалиды от общего заболевания, дети-инвалиды, ветераны боевых действий, участники ВОВ и т.д.).

К заявлению необходимо прикрепить копии документов и заполнить все необходимые формы.

Специалисты отделов социальной защиты населения осуществляют прием документов, регистрируют заявление. Заявителю после поступления документов направляется информация о статусе рассмотрения заявления – уведомление о предоставлении государственной услуги либо об отказе в ее предоставлении с указанием причины отказа.

● ПРАВОПОРЯДОК

В соответствии с Семейным кодексом РФ (п. 1 ст. 80) родители обязаны содержать своих несовершеннолетних детей. В случае, если родители свои обязательства не выполняют, средства взыскиваются с них в судебном порядке. При образовании задолженности по вине лица, обязанного уплачивать алименты по решению суда, оно уплачивает получателю алиментов неустойку в размере одной второй процента от суммы невыплаченных алиментов за каждый день просрочки. Если без уважительных причин в течение двух и более месяцев со дня возбуждения исполнительного производства лицо не уплачивает денежные средства на содержание детей, то оно может быть привлечено к административной ответственности в виде обязательных работ на срок до 150 часов, либо ареста на срок от 10 до 15 суток или наложения штрафа на лиц в размере 20 тысяч рублей.

Если лицо и дальше будет уклоняться от уплаты алиментов, оно может быть привлечено к уголовной ответственности в виде исправительных работ на срок до 1 года, либо принудительных работ на тот же срок, либо ареста на срок до 3 месяцев, либо лишения свободы на срок до 1 года.

Таван Ен

Учредитель (соучредители): Министерство информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики, Автономное учреждение Чувашской Республики «Редакция газеты «Тăван Ен» Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике - Чувашии 05 октября 2012 г. **ПИ № ТУ 21-00231.**

Газета распространяется в Чебоксарском районе, гг. Чебоксары и Новочебоксарск, а также в райцентрах Чувашской Республики

Выходит по четвергам на чувашском языке, с подачей некоторых материалов на русском.

Рукописи, фотографии, рисунки не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. Редакция не вступает в переписку с читателями. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель. Материалы в рубрике «Экономика хăвачĕ» публикуются платно.
При подготовке материалов использованы информация и фотографии с сайта администрации Чебоксарского района, официального портала органов власти Чувашии www.cap.ru.

Подписной индекс газеты **54820 П6022**

Адрес редакции и издателя: **АУ «Редакция газеты «Тăван Ен» Мининформполитики Чувашии 429500, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13**
E-mail: **tavan-en21@yandex.ru** Сайт: **www.tavanen.ru**
Факс: 8(83540) **2-12-59, 8(8352) 20-10-85**

Тел. для справок – 8 (83540) **2-12-59**. | ***Отделы:*** новостей и общественной жизни – **8 (83540) 2-21-88,** | местного самоуправления, социальной политики и организационно-массовой работы **– 8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-71,** | рекламы и подписки **– 8 (83540) 2-12-59,** | бухгалтерия – **8 (8352) 20-10-85,** | гл. редактор – **8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-85.**

Прием объявлений и рекламы, подписка с 8.00 до 17.00
E-mail: **tavanen@mail.ru** **Тел.:** 8(83540) **2-12-59**

И.о. главного редактора **В.А. ВЫШИНСКАЯ**
Дежурный по номеру **В.Ф. ШУМИЛОВА**

Материалы, обозначенные знаком Ⓟ, а также в рубриках «Саламлатпăр», «Тав тăваттăр», публикуются на платной основе.
© Перепечатка или иное воспроизведение материалов без письменного разрешения редакции запрещена.
Печать офсетная.
Объем 3,0 печ. л.
Время подписания в печать: по графику – 18.00, фактически – 17.30 04.04.2018 г.
Дата выхода в свет: 05.04.2018 г.
Тираж **2900 экз.**
Заказ № 1011
Номер отпечатан в ОАО «ИПК Чувашия» 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
Цена свободная

www.tavanen.ru Апрель 5 - 11, 2018 Таван Ен № 13 (106245-106246)

Чи паха парне мĕн хак?

«Тăван Ен» хаçатри, www.tavanen.ru сайтри салам чухлĕ! 500 тенкĕ! Квитанципе 40% йӳнĕрех.

Хăйĕн хыççăн ырă йĕр хăварнă

Тăванĕсемпе юлташĕсем унăн сăнарне асра тытаççĕ

● СЫВĂ ПУРНĂÇ

Пурăннă чухне район пурнăçĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнса тăнă, ытти сен ырлăхĕшĕн тăрăшнă çынсене асра тытасси, сума сăвасси – пирĕн, чĕррисен, тивĕçлĕ. Ун пек çынсенчен пĕри вăл – Атайкасси шкул директорĕнче вăй хунă, Шупашкар районĕн 4-мĕш созыври Депутатсен пухăвĕн депутачĕ пулнă Владислав Григорьев. Вăл йывăр чире пула çĕре кĕнĕренпе 10 çул çитрĕ. Çапах та унăн ячĕ – çывăх çыннисен, тустăванĕсемпе ĕçтешĕсен чĕрисенче упранать.

Унăн çуралнă кунĕ тĕлне ял тăрăхĕсен, ĕçтешĕсен, пĕрле вĕреннисен командисен хушшинче волейбол турнирĕ ирттересси йăлана кĕчĕ. Владислав Вячеславовича сума сăвакансем кăçал шăматкун, мартăн 31-мĕшĕнче, тĕл пулчĕç.

Владислав Григорьев 1975 çулхи апрелĕн 6-мĕшĕнче кун çути курнă. Унăн пурнăçĕ ытти сенчен уйрăлса тăман – Атайкасси шкулĕнче тăрăшса вĕреннĕ, ăна пĕтерсен аслă вĕрентӳ учрежденине çул тытнă. ЧППУн физвоспитани факультетĕнче 3-мĕш курсра ăс пухнă чухнех тăван шкулта ачасене физкультурăна вĕрентме тытăннă, çитĕнсе пыракан ăрăва сывă пурнăç йĕркине пăхăнма хăнăхтарнă. Пĕтĕм ĕçе яваплăха туйса пурнăçлакан çамрăка вырăнти шкулта директор пулма шанаççĕ. Шкулшăн нумай лайăххи пурнăçлама ĕлкĕрет Владислав Вячеславович, ĕçтешĕсем ăна паян та ăшă сăмахпа аса илеççĕ. Анчах та йывăр чире çĕнтереймест, 2008 çулта ĕмĕрлĕхех куçне хупать.

Пурнăçран ир уйрăлнă Владислав Григорьева халаллана ăмăртăва Шупашкар район пуçлăхĕ Николай Хорасев, райадминистрации пуçлăхĕн çумĕ Сергей Ванюшкин, Атайкасси ял тăрăх пуçлăхĕ Юрий Башкиров уçрĕç. Николай Евгеньевичпа Сергей Алексеевич турнира хутшăнакансене тивĕçлĕн тупăшма сунса çак ăмăртăва йĕркелекенсене Владислав Григорьев ас тăвăмне манăça кăларманшăн тав турĕç. Юрий Башкиров çамрăклах çĕре кĕнĕ депутат ял тăрăхĕнче спорта тата физкультурăна аталантарас ĕçе пысăк тӳпе хывнине каларĕ. «Ман асра Владислав Григорьев кăмăллă, ĕçлеме юратакан çын пек юлчĕ, – аса илет ял тăрăх пуçлăхĕ. Атайкасси шкулĕнче нумай çул физкультура предметне вĕрентекен Николай Беляков Владислав Григорьев пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ ыттисемшĕн тĕслĕх пулнине палăртрĕ.

Турнир темиçе тапхăрпа иртĕ. Шăматкунхи тупăшура ял тăрăхĕсен волейбол командисем мала тухассишĕн вăй виçрĕç. Хĕрӳ тупăшура малти 3 вырăна Атайкасси-1, Кӳкеç, Кăшавăш командисем çĕнсе илчĕç. Чăрăшкасси, Апаш, Атайкасси-2, Ишлей, Ишек командисем те тăрăшулăхпа палăрчĕç. Турнирăн тепĕр тапхăрĕ çитес канмалли кунсенче Атайкасси ял тăрăхĕнче малалла тăсăлĕ, ун чухне Владислав Григорьевăн ĕçтешĕсем, пĕрле вĕреннисем тата депутатсем вăйăсенче тĕл пулĕç. ■

Сăваплă ĕç тăсăмĕ

● ПУЛТАРУЛĂХ

«Тăрăн ен» фольклор ушкăнĕ çулталăкри ĕçне пĕтĕмлетрĕ. Иртнĕ çула эпир «Сăрпа Çавал çаврисем» фестиваль-конкурспа пуçланăччĕ, дипломпа тавăннăччĕ. Район территорийĕнчи Мамка ялĕнче, хыççăнах Янăшра пурăнакансене хамăр пултарулăхпа паллаштартăмăр. Кӳршĕри Чăрăшкассинче те хаваспах кĕтсе илчĕç пире. Шупашкарта «Сăрпа Çавал çаврисем» гала-концерта хутшăнма тивĕçрĕмĕр, пире дипломпа чысларĕç. Патăръел районĕнчи Тăрăна хамăр йăхташăмăрсем патне кайса килтĕмĕр. Тĕл пулу икĕ еннĕн те асра юлчĕ. Май уйăхĕнче эпир «Ункă шевлисем» фестивале хутшăнса дипломлă пултăмăр. Ишек пуххине те çитрĕмĕр, куракансене хамăр юрă-ташăпа паллаштартăмăр, кунта та пире дипломпа савăнтарчĕç. Июнь уйăхĕнче Чурачăка çитсе хавас кăмăл-туйăм парнелерĕмĕр. Районти «Акатуй» та пирĕнсĕр иртмерĕ. Республика кунне тĕп хуламăрта анлă паллă турăмăр, «Тăрăн Ен» юрриçем мăнаçлăн янăрарĕç тĕп лапамра. Мордва республикинче çуллен ирттерекен наци культурин «Эрзань Лисмапря» фестивале хутшăнтăмăр. Тăван чĕлхепе, наци çи-пуçĕпе юрласа ташларăмăр, уçланкипех сапаланнă халăха пĕр çĕре, сцена умне пуçтартăмăр. Тутар çĕршывĕнчи Аксупай районĕнче те тăрăнсене хапăл туса йышăнчĕç, хаклă тăванĕсем вырăнне хурса ăш пиллĕн ăсатса ячĕç. Хула кунĕнче Шупашкарти Ленин проспектĕнче хамăр концерта малалла тăсрăмăр, уява тухнисем пирĕнпе пĕрле савăнчĕç, чунĕсене уçрĕç, такмакларĕç, сăн та ӳкерĕнчĕç.

Акă ăçтан килет вăл чунчĕре вăй-хăвачĕ! «Юрă – халăх чунĕ» тесе ахальтен каламан çав. Бичурин ячĕллĕ музейра авалхи туй йăли-йĕркине кăтартрăмăр. Ишлей салинче «Чунпа çамрăк» фестивальте çак йĕркесен авторĕ мала тухрĕ, Кӳкеçе гала-концерта кайма тивĕçрĕ, иккĕмĕш хут конкурс лауреачĕ ятне çĕнсе илчĕ. Çĕньял тăрăхĕнчи Мошкассине ваттисене саламлама та кайса килчĕç ушкăнри чипер хĕрсемпе хастар каччăсем. Тутаркасси ял тăрăхне кĕрекен Котеркассинче вара ансамбль вĕсен клубĕ уçăлнăранпа 70 çул тултарнине паллă тума хутшăнчĕ. Эрнерен пирĕн çул Элĕк районĕнчи Кĕçĕн Тăвана тăсăлчĕ. Шупашкаркассинчи ял-йыша та халăх пĕрлĕхĕн кунĕпе саламларăмăр. Районти «Паха тĕрĕ» фабрикăра вăй хуракансене предприяти 94 çул тултарнă ятпа саламласа ăшă сăмахсем каларăмăр, чуна çывăх кĕвĕ-çемĕ парнелерĕмĕр, малашне те пысăк çитĕнӳсем сунтăмăр. Чиркӳре ĕçлекенсем районти культура керменĕнче «Сурхури çăлтăрĕсен айĕнче» каç ирттерчĕç, унта хутшăнтăмăр. Кивпулăх ялĕнче Кăшарние уявларăмăр. Пирĕн кашни номере халăх нумайччен ăшшăн алă çупрĕ, хавхалантарчĕ. Çĕнĕ Шупашкарти Химиксен керменĕнче Ираида Вдовина ячĕпе «Юри килтĕм юрлама» фестиваль йĕркелерĕç. Залри ăшăлăх пире пулăшрĕ, эпир дипломпа таврăнтăмăр.

Вулакана «Иксĕлми çăлкуçсем» радиоконкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе «Тăван Енре» паллаштарнăччĕ. Чăрăшкасси ял тăрăхĕнче отчетлă пухусем иртрĕç, ял тăрăх пуçлăхĕ В.Я. Павлов халăхпа тĕл пулчĕ. Ун хыççăн ушкăнри артистсем ял халăхне пысăк концертпа хавас кăмăл-туйăм парнелерĕç. Суйлав кунĕнче икĕ участокри – Вăрманкас Тăрăнти тата Энтимĕркассинчи суйлавçăсем патне те кайса килме ӳркенмерĕмĕр.

Республикипе хăй тăрăшулăхĕпе чапа тухнă чăнчăн чăваш, Куславкка районĕнчи çĕр ăсти, Василий Николаевич Семенов йыхравланипе Илепер, Кунер, Карамышево, Тĕрлемес ялĕсенче пулса тĕлĕнтĕмĕр. Юрă-кĕвĕ чăннипех чун уççи пулнине ĕнентĕмĕр. Çавăнпа та «юрла, тăван, юрла, юрлакан çын ырă кăмăллă пулма тивĕç».

Пур çĕрте те çывăх пĕлĕштантăш пек йышăнса кĕтсе илни чăн та çунатлантарать, хăпартлантарать, ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тума тӳсĕм парать.

АНТОНИНА ЕФИМОВА,
ВĂРМАНКАС ТĂРĂН

УТЕПЛЕНИЕ ДОМОВ
пустотелых стен, полов, чердаков
и мансард ПЕНОИЗОЛОМ И ЭКОВАТОЙ
☎ 8-919-669-16-66. ВЕСНОЙ ДЕШЕВЛЕ!
02-13

Тав сăмахĕ

С глубокой благодарностью выражаю сердечную признательность председателю РО ЧРОО «Союз женщин Чувашии» А.М. Исаевой, членам райсовета женщин, главе Чиршкасинского сельского поселения В.Я. Павлову, директору Туруновской школы В.П. Васильеву и педагогическому коллективу, жителям Туруновского округа, родным и близким за неоценимую помощь и поддержку в организации и сопровождении последнего земного пути дорогого мне человека — матери.

За добрые дела — доброго здравия и многолетия всем!

К.В. Фаизова.

04-13

● СПОРТ ЭРНИ

МАРТĂН 23-МĔШĔНЧЕ шкул ачисен спартакиади шучĕпе районта мала тухассишĕн шашкăлла вылясси пе ăмăрту иртнĕ. Вăтам пĕлӳ паракан шкулсенчен пьедесталăн тĕрлĕ картлашки çине Кӳкеçри 1-мĕш шкул, Мăнал тата Кӳкеç лицейĕн командисем çĕкленнĕ. Тупăшăва хутшăннă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 5 шкултан çĕнтерӳçĕсен ретне Карачура, Шăмăш тата Çатра-Лапсар вĕренекенĕсем лекнĕ.

МАРТĂН 29-30-МĔШĔСЕНЧЕ Канаш районĕнче Чăваш Ен кубокне çĕнсе илессишĕн хĕллехи полиатлон тĕсĕпе иртнĕ тупăшура Александр Ясмаковпа Владислав Федотов 2-мĕш пулнă.

КАНМАЛЛИ КУНСЕНЧЕ Саров хулинче япăх илтекенсем Раççейре мала тухассишĕн бадминтонла вылянă. Унта Кӳкеç лицейĕнчи Антон Яковлев хутшăннă.

МАРТĂН 28-МĔШĔНЧЕ республикăра мала тухассишĕн Сосновка поселокĕнче иртнĕ ăмăртура йĕлтĕрçĕсем вăй виçнĕ. Район спортсменĕсем çĕнтерӳçĕсен ретне кĕреймен.

ШĂМАТКУН республикăра мала тухассишĕн Сĕнтĕрвăрри хулинче иртнĕ ăмăртура ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсем кавир çине тухнă. Районти 10 çамрăк пьедесталăн тĕрлĕ картлашки çине хăпарма тивĕçнĕ.

МАРТĂН 31-МĔШĔНЧЕ «Улăп» спортпа сывлăх центрĕн стадионĕнче йĕлтĕрпе ярăнма юратакансем официаллă майпа йĕлтĕр сезонне хупнă тата Кӳкеçре мала тухассишĕн иртнĕ ăмăртăва хутшăннă. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансене райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Зоя Маслова тата Кӳкеç ял тăрăх пуçлăхĕ Владимир Вершинин ăнăçлă старт тата финиш суннă. Зоя Леонидовна спортăн çак тĕсне аталантарма – юлашки çулсенче опытлă йĕлтĕрçĕсем кăна мар, ачапăча та, ватăсем те йĕлтĕр сырма тăрăшаççĕ – район администрацийĕ те май пур таран майсем туса пама тăрăшасса палăртнă.

Кӳкеç ял тăрăх администрацийĕн парнисене çĕнсе илессишĕн старта поселокра пурăнакансем кăна мар, районти шкулсенче ăс пухакансем те, предприятисен, район тата ял тăрăх администрацийĕсен çĕнĕсем те хутшăннă. Ăмăртăва 61 спортсмен йĕлтĕр сырса тухнă. ■

● КУЛТАРАÇÇĔ

☺ ☺ ☺

Сентябрĕн 1-мĕшĕ, пĕрремĕш класс. Вĕрентекен ачасене ăнлантарать:

– Паянтан эсир шкула çӳреме пуçлатăр. Урокра шăп лармалла, ыйту пулсан алă çĕклемелле.

Вовочка аллине çĕклет…

– Вовочка, санăн ыйту пур-им?

– Çук, система мĕнле ĕçленине тĕрĕслерĕм...

www.meteorf.ru сайт пĕлтернĕ тăрăх

ÇАНТАЛĂК

Кĕçнерникун ...Апрель, 5	+5°	-3°
Эрнекун ...Апрель, 6	+7°	-3°
Шăматкун ...Апрель, 7	+7°	+2°

Апрель	8	Вырсарникун....	+6°
Апрель	9	Тунтикун	+11°
Апрель	10	Ытларикун.....	+13°
Апрель	11	Юнкун	+14°

валюта курсĕ 05.04.2018
$ 57,76
€ 70,96